Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького
0

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
МАРТ
29
ЫТЛАРИКУН
72 (4885)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ПАХА ВĂРЛĂХШĂН

Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сьоçĕ пулса иртнĕренпе уйăх çитрĕ. Сьот вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçри 1937 çулхи итогсем çинчен сўтсе-йавса 1938 çулта татах та вăйлăрах тырпул туса илес задачă лартрĕ. 1938 çулта 100 пăтран кайа илакенни пĕр колхоз та пулмала мар. Çапла кăтартса хăварчĕç сьота пухăннă делегатсем.

Çуракине массăлăн тухаччен шутлă кунсем çеç йулчĕç. Халь ĕнтĕ кашни колхозăн, кашни машинă-трактăрлă станцин çураки ĕçне ăнăçулăн ирттерме пур йенчен те хатĕр пулса тăмала. Анчах та, чылай районсенче çуракине хатĕрленес ĕçсене халь те вĕçлесе çитереймен.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре вăрлăх пысăк вырăн йышăнса тăни пуринчен те паллă. Таса та суртлă вăрлăх вăл—тĕп вырăнта тăрать. Çĕрĕç халăх комиссариачĕн сводки тăрăх вăрлăх фондне хывмали тата суртласа тасатмали плана ытлашшипех тултарнă шутланать. Анчах тĕрĕссине ĕç урăхла. Çак кунсенче Шăхасан районĕнче тĕрĕслесе тухнă хыççăн 29 колхозран 17 колхозра çураки планне тултарма вăрлăх çитменни паларнă. Патăрйел районĕнчи „Большевик“ колхозра 3 трийĕр ĕçлет пулсан та вăрлăхсене халь те суртласа çитермен. Йĕпреç районĕнче те чылай колхозсенче вăрлăхсене суртласа пĕтермен. Шăхасан районĕнче 3 пин центнер таран вăрлăх суртламасăр йулнă.

Çавăн пекех суртлă вăрлăх улăштарса илес ĕç те чăтма çук кайа йулса пырать. Ку ĕç тĕлĕшпе уйрăмăнах Тутаркас тата Ишлей районĕсене палăртмала. Шăхасан районĕнче суртлă вăрлăх улăштарас ĕçре ним йĕркелĕх те çук. Çĕрĕç пайĕн сводки тăрăх район плана ылашшипех тултарнă—6408 центнĕр улăштарнă шутланать. Районри руководителĕсем çав вăтам цифăрсене кура лăпланса ларнă. Çав вăхăтрах 7 колхозра пĕр пĕрчĕ те суртлă вăрлăх çук, вĕсен 1525 центнĕр улăштарса илмеле пулнă. Çитменнине тата Йенĕш колхозĕнче улăштарса илнĕ 197 центнĕр сĕлĕ вăрлăхне суртлă мар вăрлăхпа хутăштарса йанă. Республикипе илсен, суртлă вăрлăх улăштармали плана „Заготзерно“ йенĕпе 62,9 процент, „Госсортфонд“ йенĕпе 89 процент çеç тултарнă.

Хăшпĕр районсенче курăк вăрлăхĕ хатĕрлес ĕç те йапăх пырать. Патăрйел районĕнче пурĕ 35 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ çитмест. Шăхасан районĕнче 10 колхозра клевĕр вăрлăхĕ шачах çук.

Вăрлăх пахалăхĕ йенчен кăçал чылай районсем пит пысăк хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Чылай çĕрте вăрлăх кондицийĕ пит начар. Вăрлăх лабораторийĕсенче тĕрĕсленĕ хыççăн мартăн 25-мĕшне республикипе вăтам шутпа 55 процент таран çеç кондицилĕ вăрлăх шутланать. Улатăр, Вăрнар, Йĕпреç тата Çĕрпў районĕсенче кондицилĕ вăрлăх мĕн пурĕ те 15 процент таран çеç шутланать.

Нумай колхозсенче вăрлăх чĕрĕ. Çурхи кунсенче çавăн пек чĕрĕ вăрлăх пăсăлма пултарать. Çавăнпа та вăрлăх пахалăхĕшĕн, ăна кондицилĕ туса çитерессишĕн кĕрешес ĕç кашни бригадăрах çак кунсенче тĕп ĕç пулса тăмала. Анчах çавна чылай çĕрте ăнланса илеймен. Патăрйел районĕнчи „Большевик“ колхозра тулă тата сĕлĕ вăрлăхĕ чĕрĕ пулин те ампарта 1—1,5 метр хулăмĕш выртараççĕ. Çухереххĕн сарса типĕтме вырăн та çук, ĕç кунĕсем тăрăх валеçмели тырра колхозниксене памасăр тăнă пирки ытти ампарсем тырăпа тулли лараççĕ.

Кун пекки вăл пĕр колхозра çеç мар. Колхозниксене валеçмели тырра халех колхоз амбарĕсенчен пушатса, вăрлăхлăх хăварнă тырра çўхен сарса типĕтме кирлĕ.

Техникăла культурăсен вăрлăх пахалăхĕ те çителĕксĕр. Уйрăмăнах кантăр вăрлăхĕн кондицийĕ начар. Республикипе тĕрĕсленĕ 4805 центнĕр вăрлăхран 3873 центнĕр кондицилĕ мар шутланать.

Хăшпĕр çĕрте „Заготзерно“ складĕнчен улăштарса илнĕ суртлă вăрлăх пахалăхĕ те пит начар. Канашри базăран илнĕ вăрлăх пахалăхĕ начар пулнă пирки Шăхасан районĕнчи колхозсен илнĕ вăрлăха кăлле леçсе памала пулнă. Çакă вăл тăшмапла ĕç пулса тăрать. Ку ĕçе республикă прокурорĕн тĕрĕслесе айăплисене ответ тыттармала.

Вăрлăх пахалăхне пĕр хут çеç тĕрĕслени пачах çителĕксĕр. Çак кунсенчех районсенчи вăрлăх лабораторийĕсен иккĕмĕш, виççĕмĕш хут тĕрĕслесе тухмала. Анчах та хăшпĕр лабораторисем пит начар ĕçлеççĕ. Йĕпреç районĕнчи вăрлăх лабораторийĕ иртнĕ çулхи октăбĕр уйăхĕнчен пуçласа пайан куна çитиччен мĕн пурĕ те 10 колхоза çеç вăрлăх пахалăхне тĕрĕслесе панă.

Вăрлăх хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхма кирли çинчен партипе правителствă вăхăтра кăтартусем панă. Вăрлăх тĕлĕшпе, унăн пахалăхĕ тĕлĕшпе пайан куна республикăра ĕç çавăн пек начар тăнăшăн чи малтанах çĕрĕç оргăнĕсемпе машинă трактăрлă станцисем тата колхоз руководителĕсем айăплă пулаççĕ. Йалхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри сьотĕнче пулса кайнă хыççăн Патăрйел районĕнчи аслă агроном Павлăв пĕр колхозра та пулса курманни çавна тĕплĕн çирĕплетет.

Вăрлăхшăн кĕрешес ĕçре парти райкомĕсем тата райĕçтăвкомсем çинчен те ответлăх пĕртте сирĕлмест. Суртлă вăрлăх улăштарас ĕç кайа йулнăшăн Тутаркас, Ишлей, Шăхасан райкомĕсем, вăрлăхсен начар пахалăхĕшĕн Улатăр, Вăрнар, Çĕрпў, Патăрйел районĕсенчи парти организацийĕсем те ответлă пулса тăраççĕ.

Чи ответлă, чи хĕрўлĕ ĕç вăхăчĕ çитсе тăчĕ. Туса çитермели ĕçсем нумай. Çав ĕçсем хушшинче вăрлăх хатĕрлес тĕлĕшпе тумали ĕçсем чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулса тăраççĕ. Çĕрĕç работникĕсен, колхоз руководителĕсен оперативлăха темиçе хут вăйлатмала. Кайа йулнă ĕçсене халех туса çитерсе çураки ĕçне ирттерме пур йенчен те хатĕр пулса тăмала.

Йапонипе Манчжоу-Го Хĕвелтухăç-Китай чукун çулĕшĕн тўлеме чарăннă

Шанчăклăн пĕлекен çĕртен ТАСС çакăн пек хыпар илнĕ:

Манчжоу-Го казначействи ССР Союзне Хĕвелтухăç-Китай чукун çулĕшĕн тўлеме панă йулашки обйазателства тăрăх 6 мĕлйун иена йахăн мартăн 23-мĕшĕнче тўлемеле пулнă. Манчжоу-Го правителстви çавна тўлемен. Çавăн пирки ССР Союзĕн Токиори полномочилĕ представителстви Йапони правителствинчен ыйтнă,—вăл (Йапони правителстви) Хĕвелтухăç—Китай чукун çулĕ çинчен тунă догăвăр тăрăх пур тўлевсене те гарантиленĕ, анчах Йапони правителстви çав обйазателствăна пурнăçа кĕртессинчен пăрăннă.

Совет правителстви Манджоу-Го тата Йапони правителствисене вĕсем Хĕвелтухăç-Китай чукун çулĕ çинчен тунă догăвăр тăрăх хăйсем çине илнĕ обйазателствăсене пурнăçа кĕртменшĕн хытă протест панă.

Манчжоу-Го тўлемели обйазателствăсем, Йапони правителстви çав догăвăр тăрăх пана гарантисем пекех, кирек те мĕнле пулсан та пурнăçа кĕмелескерсем пулнă. Уйрăмăн илсен, Китай-Хĕвелтухăç чукун çулне сутни çинчен тунă догăвăр çумне Йапони йутçĕршыв ĕçсен халĕхи министрĕн нотине хунă, çав нота тăрăх Йапони правителстви хăй çине çакăн пек обйазателства илнĕ: Манчжоу-Го правителствин тўлес тĕлĕшпе йăвăрлăхсем пулсăн, вара çакна тумала—„ССР Союзĕн правителстви Манчжоу-Го правителствинчен илмели тўлевсене пĕтĕмпех тата Китай-Хĕвелтухăç чукун çулĕ çинчен тунă килĕшўре палăртнă срукĕсенче илмеле пултăр, çав асăннă йăвăрлăхсем пирки ССР Союзĕн правителстви нимĕнле сийен те ан куртăр“.

Лайăх пĕлекенсем çапла калаççĕ: казначействăсен обйазателствисемшĕн тўлеменни çав правителствăсен нимĕнпе тўлеме çук чухне çеç пулать, теççĕ.

(ТАСС).

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: И. Д. Папанин, П. П. Ширшов, Е. Т. Кренкĕл тата И. К. Федăрăв йулташсем „Йермак“ пăрçĕмĕрен çинче.
Халип фото-ўкерчĕкĕ.
(Союзфото).

ССР Союзĕн орденĕсене пани

Мартăн 27-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин йулташ хăйула папанинцăсене тата куçса çўренĕ „Çурçĕр полюсĕ“ станцинче пулнисене пăр çинчен илсе тухнă експедицире пулнисене орденсем панă.

Председател патне „Çурçĕр полюсĕ“ станци начальникĕ И. Д. Папанин пырса тăрсан, залăра алă çупни тăвăллăн йанăраса кайать. Калинин йулташ ăна Совет Союзĕн Геройĕ йатне пани çинчен грамăтă, икĕ Ленин орденĕ тата укçан наградă парать. Михаил Иванович хăйула польарнике, нимĕнрен хăраса тăман тĕпчевçĕне ăшшăн сывлăх сунать тата ыталать.

Папанин йулташ хыççăн Совет Союзĕн Геройĕ йатнĕ пани çинчен грамăтăсем, орденсем тата укçан наградă унăн мухтавлă тусĕсем Е. Т. Кренкĕль, П. П. Ширшов, Й. К. Федăрăв илеççĕ. Залăра çĕнĕрен алă çупни йанăрса кайать. Пухăннисем социалисăмла çĕршывăн тивĕçлĕ ывăлĕсене пысăккăн хавасланса хисеп тăваççĕ.

Унтан куçса çўрекен пăр çинче хĕл каçнисене пăр çинчен илес тĕлĕшпе ĕçленĕ експедицире пулнисем наградăсем илеççĕ. Вĕсен хушшинче—„Таймыр“ капитанĕ Барсуков йулташ, „Мурман“ капитанĕ Котцов йулташ, „Мурманец“ капитанĕ Улйанăв йулташ, „Таймыр“ çинчи експедици начальникĕ Остальцĕв йулташ, Власăв пилот т. ыт. те.

„Таймыр“, „Мурман“, „Мурманец“, „Йермак“ морйакĕсен тата експедицийе хатĕрленес ĕçе хутшăннă çынсен йачĕпе Остальцĕв йулташ тата пĕрле апатлану ĕç инженерĕсен институчĕн директăрĕ Бельаков йулташ сăмах тухса калаççĕ.

Унтан вара Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн, Тинĕс-Çар флочĕн командирĕсене тата ССР Союзĕн Шалти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн работникĕсене орденсем панă.

Орденсем панă хыççăн М. И. Калинин сăмах тухса каланă.

Наградă илнисем Сталин йулташа, партийе тата правителствăна хисеплесе хĕрўлĕн алă çупса саламланă.

(ТАСС).

СОВЕТ ÇĔРШЫВĔНЧЕ

●● 1935 çулта Тула облаçĕнче пĕр пин гектар лаптăк çинче „Тульские засеки“ йатлă вăрман заповеднике тунă. Малтан шутласа пăхнă тăрăх заповеднике 33 тĕслĕ тискер кайăксемпе 130 тĕслĕ вĕçен кайăксем пурăнаççĕ. Заповеднике пăшисем, сăсарсем, выдрăсем, фазансем, ăсансем тĕл пулаççĕ.

●● Йарославĕл облаçĕнчи, Лубимск районĕнчи ертелĕн Марийа Васильйевна Костылĕвă колхозници йĕкĕрешсем виçĕ арçын ача çуратнă. Амăшĕ те, ачисем те сывах. Районри сывлăха сыхлав пайĕ ачасене медицинă тĕлĕшпе уйрăмăнах асăрхаса пăхать. Марийă Васильйевнăн халĕ пурĕ 9 ача.

●● Челябинскри плугăсем тăвакан Колюшченко йачĕпе тăракан савăтăн кăçал пĕтĕмпех металлран тунă универсаллă сарлака сцепкăсене 10 пин штук туса кăлармала. Çак сцепкă „ЧТЗ“ трактăр пулта рулăхĕпе уйхир ĕçĕнче йалтах усă курма май парать. Çав сцепкăпа трактăр хыçне пĕр вăхăтрах ултă культиватр, йе çавăн чухлех 24 ретлĕ çейăлкă, йе 36 „Зиг-заг“ сўре т. ыт. кăкарса йама пулать.

●● Украинăра виноград плантацийĕсем 62 пин гектар шутланаççĕ. Кăçалхи çул виноград лартнă лаптăкĕ тата 2.274 гектар ўсет.

Кадрсене вĕрентме

Л. М. Каганович йачĕпе тăракан шарикоподшипник савăтĕнче (Мускав) кадрсене вĕрентес тĕлĕшпе пысăк ĕç тăваççĕ. Савăтра 8.907 çын—стахановецсем, рабочисем, специалиссем тата служăшчисем техникăна вĕренеççĕ. 1938 çулта техникăна вĕрентме тата рабочисемпе специалиссен квалификацине ўстерме 1 200 пин тенкĕ укçа уйăрса панă.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Бўджет комиççи составĕ

Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет Президиумĕ Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн Бўджет Комиççи составне çак йулташсенчен çирĕплетнĕ:

Комиççи председателĕ—П. Д. Краснов йулташ—ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, Тĕпĕçтăвком членĕ, Комиççи председателĕн заместителĕ—Г. О. Оçипăв йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ.

Комиççи членĕсем:—И. В. Новикăв йулташ—ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, О. Т. Харитонăв йулташ—ССРС Верховнăй Совет депутачĕ, А. В. Васильйĕв йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ, П. Н. Оçипăв йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ, В. И. Иварбейĕв йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ, О. Ф. Каштанăвă йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ, З. Ф. Фейзăв йулташ—Тĕпĕçтăвком членĕ, С. Р. Родионăвă йулташ—Тăвай райĕçтăвкомĕн председателĕ, Н. С. Хабарăв йулташ—Шупашкар райĕçтăвкомĕн председателĕ, Ф. Т. Çеменăв йулташ—Улатăр райĕçтăвкомĕн председателĕ, К. Д. Медйанин йулташ—Куславкка райĕçтăвкомĕн председателĕ, Н. Д. Бугров йулташ—Канаш райĕçтăвкомĕн председателĕ, Г. М. Гусĕв йулташ—Вăрнар райĕçтăвкомĕн председателĕ, П. И. Калинкина йулташ—Шупашкар хула совечĕн председателĕ, А. А. Малинин йулташ—Йетĕрне райĕçтăвкомĕн председателĕ, Д. Г. Ларионăв йулташ—Пăрачкав райĕçтăвкомĕн председателĕ тата И. Л. Ларионăв йулташ—Турхан райĕçтăвкомĕн председателĕ.

Пропагандис отчочĕ хыççăн

Канашри вакунсем йусакан савăтри партком парти вĕренĕвĕн кружокне мĕнле йертсе пыни çинчен пропагандис Никитин йулташ докладне итленĕ. Савăтри парторганизацире ПСК(б) Партин историне вĕренекен кружоксем 3 пур. Вĕсенчен иккĕшĕнче Ленин тата Сталин произведенийĕсем тăрăх, тепринче учебник тăрăх вĕренеççĕ. Çак кружоксенче 46 коммунис вĕренет.

Политикă тĕлĕшĕнчен начар хатĕрленнĕ кандидатсемпе сочувствуйушчисем вальли политграмăтă кружокĕ иккĕ тунă. Вĕсенче сочувствуйушчисемсĕр пуçне, 15 кандидат вĕренет. Кунсăр пуçне токарнăй командăра ĕçлекен 4 коммунис парти историне вĕренекен комсомолецсен кружокне çўреççĕ. Çапла вара парторганизацинчи 86 коммунисран 65-шĕ вĕренеççĕ.

Организацири 20 коммунис вĕренме çўремеççĕ. Пуринчен ытла парти активĕ вĕренĕве хутшăнман. Парти членĕсем: Меркуйерпа Суханăв йулташсем пĕр хут çеç занятисенче пулнă. Парти членĕ Демкин пĕрре те пулман. Вĕренĕве Çеменăв, Йуркин, Садыков, Тимофейĕв, Митрофанăв йулташсем пĕр занятинче те пулман.

Сăлтавĕ мĕнре? Партком парти вĕренĕвне организацилес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлемест. Партком çекретарĕ уйрăм кружоксенче ĕç мĕнле тăнине пĕлмен.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Испанири фронтсенче

Мартăн 26-мĕшĕнче пăлхавçăсем Бухаралоса (Пинăран хĕвелтухăçнеле) йышăннă. Республикă çарĕсене Кандасносрен тухса кайма тивнĕ. Ебро йуханшывĕнчен кăнтăр йенчи районта пăлхавçăсем халĕ те хыттăн атакăсем тăваççĕ. Республикă çарĕсем Мас де Лас Матаса, Агуавива тата Кастелйотана (Алькорисăран кăнтăрпа хĕвелтухăçнеле) пăрахса хăварнă.

Мадридран Çурçĕреле республикă çарĕсем атакă тума пуçланă. Вĕсем Ель Кардосо йатлă йала йышăннă. Республикă çарĕсем хыттăн атакă тунă пирки пăлхавçăсене ирĕксĕрех кайала, çурçĕреле чакмала пулнă.

Мадрид сывăхĕнчи фронтра артиллерисем хире хирĕç персе тăни палăрать. Республикă çарĕсем мартăн 25-мĕшĕнче каçхине тата мартăн 26-мĕшĕнче ирхине пăлхавçăсен Мадридран Çурçĕреле, хĕвеланăçнеле тата кăнтăрала вырнаçнă позицийĕсене илнĕ.

Естремадура районĕнче республикă çарĕсем хыттăн наступлени тума пуçланă. Вĕсем ла Корона, Каса Вехеда тата Марикантильона йышăннă. Республиканĕцсем пăлхавçăсен салтакĕсене 50 çын ытла тыткăна илнĕ тата вăрçă хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

Вальдеторно сывăхĕнче пулнă сывлăшри çапăçура республиканĕцсем фашиссен пилĕк самольотне персе ўкернĕ.

(ТАСС).

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă çарĕн бойецĕсем каннă вăхăтра.
(Союзфото).

Пысăк çĕнтерў тунă

Республикă çарĕсем, пăлхавçăсен фронтне татса, вĕсем вырнаçнă çĕре 10 километр шалала кĕрсе кайнă. Республикă чаçĕсем пăлхавçăсен виçĕ ротине йалтах аркатса тăкнă. Кунсăр пуçне республиканĕцсем пăлхавçăсенне пĕр тупă, вунă пулемет тата темиçе çĕр винтовкă туртса илнĕ. Йалсем витĕр тухнă чухне республикă чаçĕсене пур çĕрте те халăхсем савăнăçлăн кĕтсе илсе саламланă. (ТАСС).

Республикăлă Испанипе пĕр шухăшлă пулни

Франци компартийĕн „Йуманите“ хаçатĕнче Франци парламĕнчĕн членĕсен коммунис Дўклоран илнĕ пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă. Дўко Барçелонăран таврăннă пулнă. Вăл çапла пĕлтернĕ: Италипе Герман авиацийĕ хуласем çине тискеррĕн бомбăсем пăрахать пулин те, халăхсен шухăш-кăмăлĕ лайăхах. Республикă çарĕн бойецĕсен кăмăлĕсем хăйсене пĕр шелемесĕр тăшманпа çапăçас шухăшпа тулнă,—тенĕ. Дўкло çапла каланă: республикă çарĕ Италипе Германирен авиаци тата артиллери илсе тăракан фашиссене хирĕç çапăçать,—тенĕ.

„Йуманите“ кашни кунах рабочисен тĕрлĕ организацисем редакцине йаракан резолюцисене пичетлесе кăларать. Вăл резолюцисенче ĕçсыннисем Францие республикăлă Испани хушшинчи чикĕне уçма ыйтса çыраççĕ. (ТАСС).

Польшăпа Литва хушшинчи лару-тăру

Литван малтан оборонă министрĕ пулнă Дирмантас сеймра (парламентра) сăмах тухса каланă чухне çапла пĕлтернĕ: „Епĕр ни польаксен лозунгĕсенчен, ни Польшă дивизисем Литва чиккинче маршсем тунинчен, ни çĕршер самольотсем вĕçнинчен,—вĕсенчен пĕр пайĕ пирĕн территори çинче курăнасси патнех çитсе тăнă пулнă,—хăраса тăмарăмăр. Литва правителстви пирĕн тата Йевропăри лару-тăрува та, епĕр çапăçма хатĕррине тата Польшăн хăратса тăратнă требованине те нимĕн хăраса ўкмесĕрех сўтсе-йаврĕ. Кун чухне вара, халь пирĕн интерессене пырса тĕкĕнекен ыйтусене алла хĕçпăшал тытса татса памали вăхăт çитмен-ха, тесе йышăнтăмăр епĕр… Халь дипломатсем калаçчăрха“,—тенĕ.

Çакăн пек каласа пĕлтерни Литва правителстви Польшă ультиматумне мĕнле сăлтавсемпе йышăннине ăнлантарса парас тĕллевĕ лартать, мĕншĕн тесĕн, Литва халăхĕсен анлă сийĕсем Польшă ультиматумне йышăннă пирки хăйсем тăрăхнине халĕ те кăтартсах пыраççĕ.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Куславкка райкомĕ ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн решенисене мĕнле пурнăçлат

Куславккари парторганизацинче уйрăм коммунистсене партирен кăларас ĕç çине, партирен кăларнисен апелляцийĕсем çине чунсăр, бюрократла пăхни сахал пулман. Кунта тӳрĕ ĕçлекен коммунистсенех, ним айăпсăр, елекçĕсем хыççăн кайса, партирен кăлара-кăлара пăрахнă. Ку йăнăшсене ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнчи пленумĕ кăтартса панă хыççăн тӳрлетме тытăннă. Халĕхи вăхăтра коммунистсем панă апелляцисене пурне те пăхса тухнă. Партирен тĕрĕс кăларман коммунистсене парти ретне кайала илнĕ.

Райлитра ĕçленĕ Мошков коммуниста халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнă тесе партирен кăларса пăрахнă. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, Мошков йулташ халăх тăшманĕсемпе çыхăну тытнине палăртман. Çавăнпа та Парти Обкомĕ райком решенине пăрахăçа кăларса, Мошков йулташа парти ретĕнчех хăварнă.

Районри финанс пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ М. Качейкин коммуниста хăйне каласмасăрах парти райкомĕ Тĕрлемесри заготзерно управляйущине лартма йышăннă. Качейкин йулташăн сывлăхĕ начар пирки, вăл кӳ ĕçе кайасшăн пулман, ăна хăй ĕçлекен вырăнтах хăварма ыйтнă. Парти райкомĕ нумай каласса тăмасăрах 1937 çулти декабрĕн 9-мĕшĕнче кӳ ыйтăва райком бюро ларăвĕнче сӳтсе йавать, Качейкин йулташа партирен те, ĕçрен те кăларма постановлени йышăнать. Партколлеги çак ĕçе пăхса тухса, Качейкин йулташа парти ретĕнчех хăварма тунă. Партколлеги çавăн пекех парти райкомĕн решенине пăрахăçа кăларса, Туганапра вулав çурчĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлекен Филиппăвă йулташа та парти ретне кайала илнĕ.

Парти райкомĕ хăй те партирен кăларнисене тепĕр хут пăхса тухса, хăйĕн йăнăшĕсене тӳрлетнĕ. Партирен тĕрĕс кăларманнисене парти ретне кайала илмеле тунă. Акă Чăвашсойузăн хатĕрлев кантурĕн директăрĕ пулса ĕçленĕ Захарăв йулташа парти билетне çухатнăшăн парти райкомĕ выговор панă тата ĕçрен кăларнă пулнă. Кун хыççăн Захарăв йулташ Шупашкарти çыхăну управленинче тата Пăрачкаври хатĕрлев кантурĕн директăрĕ пулса ĕçленĕ. Парти райкомĕ Захарăв çухалнă тесе, ăна партирен кăларса пăрахнă. Халĕ Захарăв йулташа парти ретне кайала илнĕ. Çапла вара пĕтĕмпе 8 çынна парти ретне кайала илнĕ. Анчах ку йăнăшсенчен урок тăвас пулать. Кайала илнĕ кашни коммуниста парти ĕçне хутшăнтармала.

Тăшманла елементсене парти ретĕнчен кăларса ыватнă хыççăн, парторганизаци татах çирĕпленчĕ. Халĕ парти ретне коммунизм тăвассишĕн тăрăшса ĕçлекен рабочисемпе колхозниксем, çирĕп интеллигентсем кĕреççĕ.

Парти Тĕпкомĕ ПСК(б) Партине çĕнĕ членсем илессине çĕнĕрен пуçарса йанăранпа Куславкка районĕнче 25 çынна парти ретне илнĕ, 26 кандидата парти членне куçарнă. Парти ретне йулашки çулсенче ӳснĕ стахановецсем, активиссем кĕреççĕ. Акă, вĕсенчен хăшпĕрисем: 1938 çулта районра пĕррĕмĕш вырăнта тăракан Аманик йалсовет председательне Королĕов йулташа партине илнĕ. Кормилицын—комбинатри стахановец. Михайлăв—Кунер йалĕнчи учител. Дарешин—комбинатри транспăрт цехĕн начальникĕ т. ыт. те. МТС-ри трактăр бригадин бригадирне Алексейĕв йулташа, Куснар йалсовет председательне Йаранцĕв йулташа кандидатран парти членне куçарнă.

Халĕхи вăхăтра комбайнерка Айдарăвă, комбинатри стахановка Морскова йулташсем партине кĕме хатĕрленеççĕ. Анчах партине илес ĕçре чăрмавсем чылайах. Хăшпĕр коммунистсем лайăх пĕлсе тăракан стахановецсенех рекомендацисем памасăр тăраççĕ. Теприсем рекомендацине парсан та кайала илеççĕ. МТС директăрĕ Воробйов йулташ трактăр бригадин бригадирĕ Айдарăвă йулташа партине кĕме рекомендаци панă пулнă. Айдарăвă йулташ Воробйов ĕçĕсене критиклене хыççăн Воробйов рекомендацине кайала илнĕ. Унтан та ытларах ăна хĕсĕрлеме тапратнă.

Тепĕр çитменлĕх, вăл—партине илнисене парти документĕсене вăхăтра паманни. 1937 çулта 15 çынна парти ретне илнĕ. Вĕсенчен виççĕшĕ парти документĕсене илмен. 1938 çулта 6 çынна партине илнĕ. Вĕсенчен пĕри те парти документĕсене алла илмен. Кандидатран парти членне куçнисем те çавăн пекех парти документĕсене вăхăтра илеймеççĕ. Акă, Куславкка комбинатĕнче ĕçлекен Кочетков йулташ 1936 çултанпа парти билетне илеймест. Паллах, çак çынсем вĕсем партин хупă пухăвĕсене çӳреймеççĕ, парти ĕçне те кирлĕ пек хутшăнаймаççĕ. Ку çитменлĕхе кĕске вăхăтрах пĕтерес пулать.

Парти райкомĕ йулашки вăхăтра партине илес ĕç уйрăм парторганизацисенче мĕнле пыни çинчен отчотсем итленĕ. парторгсемпе семинарсем иртернĕ. Çак ĕçсене тунă хыççăн, уйрăм парторганизацисем парти ретне ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеме тытăнчĕç. Халĕ парторганизацисенче сочувствуйущисен речĕ ӳсни палăрать. Районра 70 сочувствуйущи. Парти райкомĕ кашни уйăхрах сочувствуйущисене пуххса канашлу иртерет. Сочувствуйущисене парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă. Районра 60 кандидат. Вĕсене парти вĕрентĕвне хутшăнтарнă, анчах вĕсене пухса каласман. Çавăнпа та ĕнтĕ кандидатсене парти членне куçарас ĕç çителĕксĕр пырать. 1938 çулта 6 кандидата çеç парти членне куçарнă.

Пур ĕçе те кадăрсем татса параççĕ. Çавăнпа та кадăрсене вĕрентмеле, ĕçре пулăшса пымалла. Ку кадăрсем ӳсеççĕ, вĕсем партипе совет влаçĕ шанчине ĕçре кăтартаççĕ. Районра халĕ чылай ответлă вырăнсенче çĕнĕ кадăрсем ĕçлеççĕ. Парти райкомĕн 4 инструктăр, вĕсем пурте çĕнĕ çынсем. Толстов йулташ йалсовет секретарĕ пулса ĕçленĕ. Огурцăв колхоз председателĕ. Иванов рабочи пулнă. Колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ Йакимăв йулташ районри хатĕрлев комитечĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Захарăв йулташа йалсовет председателĕнчен МТС директăрĕн политикă йенĕпе ĕçлекен заместителĕ туса хунă. Йалсовет председателĕ пулса ĕçленĕ Данилăв йулташа районри финанс пайĕн пуçлăхне лартнă. Çапла вара коммунистсенчен пĕтĕмпе 56 çынна тĕрлĕ ответлă вырăнсене ĕçлеме лартнă. Ку таранчен пĕчĕк ĕçре ĕçлекен çынсем йĕртсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме тытăнчĕç. Ку çынсен ĕç опычĕ çителĕксĕр. Çавăнпа та вĕсене вĕрентни, ĕçре пулăшса пыни кирлĕ. Çакă ĕнтĕ парти организаци умĕнче тăракан задачă.

Комсомолĕцсене партине илнĕ

ИШЛЕЙ. ПСК(б)П Тĕпкомĕн йанварти пленумĕ тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн 5-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене комсомолĕцсем хушшинче сӳтсе йавса вĕренсе пынă май, комсомолĕцсем парти ретне кĕрессi ӳссе пырать.

Комсомол райкомĕ 1938 çулта 11 комсомолĕца партине кĕме рекомендацисем панă. Вĕсенчен чылайĕшне парти ретне илнĕ те.

Парти ретне кĕрекенсем пурте—общественăлă тата производствăлă ĕçсенче лайăх ĕçлекен комсомолĕцсем. Владимир Михайлăв „Коммунист" колхоз счетоводĕ пулса ĕçлет. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра агитатăр пулса ĕçленĕ. Халĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентессипе агитатăр пулса ĕçлет. Çавăн пекех Чаканарти вулав çурчĕн пуçлăхне Ф. Смирнов йулташа та партине илнĕ.

Крылов ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлас умĕн Йаранайкасси йалсоветĕнче агитатăр пулса ĕçленĕ. Агитаципе пропагандă ĕçне лайăх туса пынине кура, халĕ ăна комсомол райкомĕн секретарĕн заместительне суйланă. Кунпа пĕрлех вăл штатлă пропагандис пулса ĕçлет. Вăл йертсе пыракан политшкулсем лайăх ĕçлеççĕ, комсомолĕцсем заняттисене йĕркелĕ çӳреççĕ.

МТСтанцин çумĕнчи трактăриссен курсĕнче Александр Иванов комсомолĕц пур предметпа та лайăх вĕренсе пырать. Вăл пĕр трактăрпа 900 гектартан кайа мар сухаласишĕн ăмăртăва тухнă. Комсомол райкомĕ ăна партине кĕме рекомендаци панă.

Иван Кольцов Тăрăн йалсоветĕнче утăмĕш çул почтальйон пулса ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн кашни çулах премi илнĕ. Кунсăр пуçне колхозра стена хаçат редакторĕ пулса ĕçлет. Стена хаçатĕнче колхозри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене лайăх çутатса тăрать. Хăйĕн пĕлӳлĕхне хăпартассишĕн тăрăшать. Халĕ вăл партине кĕме хатĕрленет.

Гер. Шчербаков.

Агитатăрсен лайăх ĕçĕ

Аслă Чак (Вăрмар р.) йалсоветĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра суйлав участкисем иккĕ пулнă. Çак участкăсенче пурĕ 24 агитатăр ĕçленĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ комсомолĕцсем.

Мартăн 16-мĕшĕнче Аслă Чак йалĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйланă вăхăтра агитатăрсем, довереннăйсем пулса ĕçленĕ комсомолĕцсен партире тăманнисен канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлура ПСК(б) Парти Райком секретарĕ Павлăв йулташ РСФСР Верховнăй Советне тата ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Положенисене тĕплĕн вĕренесси çинчен, ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçлемели çинчен каласа пачĕ. Çакăн хыççăн епĕр иртнĕ суйлавра ĕçленĕ агитатăрсене пĕрлештерсе акитатăрсен группи турăмăр. Вăл группăна учител А. Илйин йулташ йертсе пырать. Халь агитатăрсем пĕр хут семинарта пулчĕç. Агитатăрсем халĕ хăйсен çумне çирĕплетнĕ килсенче суйлавçăсене суйлав Положенийĕсене вĕрентеççĕ. Çак агитатăрсем килĕсенче вĕрентнисĕр пуçне тата колхоз правленинче, йалсовет канцелярийинче, вулав çуртĕнче пухăннă çынсемпе суйлав çинчен калаçусем иртерес çĕ. Тĕнчери лару-тăрусем çинчен докладсем тăваççĕ. Халь уйрăмăнах Испанири, Китайри вăрçă ĕçĕсем çинчен, Германипе Австри хушшинче пулса иртекен ĕçсем çинчен докладсем итлетпĕр. Вулав çуртĕнче тĕрлĕ справкăсем паракан сĕтел организациленĕ. Стена хаçачĕ йĕркелĕ тухса тăрать.

В. Андрианăв.

Балтири Хĕрлĕйалавлă флотра. Н. Ф. КАЗАКОВ краснофлотĕц-отличник „Марат" линкор çинчи хисеплĕ вахтăра.

Хайкин фото-укерчĕкĕнчен.

(Сойузфото).

Хаçатсене пăхса тухни

Комсомол пурнăçĕпе ĕçĕсене тĕплĕн çутатмала

„Çамрăк большевик"—комсомолĕцсемпе ĕççамрăкĕсен хаçачĕ. Ленинла комсомол умĕнче тăракан тĕп задачă—вăл комсомолĕцсемпе ĕççамрăкĕсене коммунисла воспитани парасси, вĕсене Ленин—Сталин парти ĕçĕсемшĕн чĕререн тăрăшса ĕçлекен туса вĕрентсе çитĕнтересси пулать. Çак тĕп задачăна пурнăçа кĕртес ĕçре „Çамрăк большевик" хаçат комсомолăн чăваш организацин аллинче чи çивĕч, чи вăйлă хĕçпăшал пулса тăмала.

Хаçатăн ĕçĕнче комсомолĕцсене, ĕççамрăкĕсене коммунисла воспитани парас, большевисăмпа хĕçпăшаллантарас ыйтусем тĕп вырăнта пулмала. Ку вăл комсомол организацисен, политшкулсемпе кружоксен, уйрăм пропагандиссен, агитатăрсен ĕçĕсене тĕплĕн çутатмалине, лайăх опытсене сармалине, начар ĕçлекенсене критиклемелине пĕлтерет. Кашни комсорг, комитет секретарĕ, пропагандис, агитатăр тата кашни комсомолĕцпа ĕççамрăкĕ „Çамрăк большевик" хаçатра хăйне кулленех кирлĕ, ĕçе лайăхлатма, ĕçлеме вĕрентекен материал шырать. Вулакан хаçатра хăйне кирлĕ материала тупса вулаймасан, вăл хаçат редакцин ĕçĕпе кăмăлсăр пулать, пăшăрханать. Ку вăл хальхи совет çамрăкĕсем политика тата культурă тĕлĕшĕнчен хăвăрт ӳссе пынинчен тухса тăрать. Паллах, пайанхи стахановец, ударник, комсомолĕц-учител, студент, активис, пропагандис, агитатăр, ĕççамрăкĕ хăй мĕнле вĕренни, мĕнле ĕçлени çинчен хаçатра çиелтен мар, тĕплĕн, культурлă çутатма ыйтать.

Комсомолĕцсемпе ĕççамрăкĕсен йалан ӳссе пыракан ыйтăвĕсене „Çамрăк большевик" хаçат çителĕклĕ çутатса пырать-и?

Редакцинче ĕçлекенсем: „Епĕр çамрăксем пирĕнтен ыйтнине пурнăçа кĕртсе пыратпăр, анчах уйрăм çитменлĕхсем пур" тесе ответлеме пултараççĕ. Анчах вулакансем çак ответа хирĕç, „Пире „Çамрăк большевик" нумай ыйтусем тăрăх кăмăла каймасть" тесе ответлеççĕ.

Çакна çирĕплетме пропагандис **И. Константинăв** йулташ çырунне илсе пăхăпăр. Вăл тӳрех çапла çырать:

„Çамрăк большевик" хаçат комсомол организацисен ĕçĕсемпе интересленмест. Комсомол организацисен ĕçĕсене тĕплĕн çутатмасть. Политкружоксем мĕнле ĕçлеççĕ, большевисăма вĕренес ĕçе ытти организацисенче мĕнле организациленĕ? Епĕ çаксене „Çамрăк большевик" хаçатра тупса вулаймастăп, пропагандиссен лайăх ĕçĕн опытне çутатнине кураймастăп".

Константинăв çырни çумне епĕр çакна çеç хушма пултаратпăр: „Çамрăк большевик" 1938 çула кĕнĕрен вара „Хĕрлĕ Чутай организацинче литература çук тесе вĕренмеççĕ", „Елĕк районĕнчи почтăра тата типографинче ĕçлекенсем кашни уйăхра виçĕ хутчен занятти йĕркелĕ туса иртереççĕ" тесе çырнисĕр пуçне, комсомол организацисенче марксисăм-ленинийăм теорине вĕренес ĕçе мĕнле организациленни çинчен нимĕн те çырман. Пĕр райкомăн, пĕр организацин, пĕр кружокăн, пĕр пропагандисăн лайăх ĕçне те кăтартман, начар ĕçлекенсене критиклемен. Çапла вара, хаçат комсомол организацисен чи ответлă ĕçĕсем çинчен çутатассине, ку ĕçре вырăнта ĕçлекенсене пулăшассине манăçа хăварать. Çак факт „Çамрăк большевик" комсомол активĕпе, комсоргсемпе, комитет секретарĕсемпе, пропагандиссемпе, агитатăрсемпе тачă çыхăнманни çинчен калать.

Кунсăр пуçне, **Соснова** йулташ хаçатăн çитменлĕхĕсене палăртса, акă мĕн çырать:

„Пирĕн промышленнăçра, йалхуçалăхĕнче, культурă строительствинче паллă стахановецсем пур. Лайăх вĕренекен студентсем, лайăх ĕçлекен педагăгсем, вожатăйсем пур. „Çамрăк большевик" хаçатăн çаксен опытне çутатмала. Анчах епĕр, вырăнсенче ĕçлекенсем, хаçатра çаксене курмастпăр".

Чăнах та ĕнтĕ, „Çамрăк большевик" промышленнăçри стахановецсен, учителсен, вожатăйсен, пионер отрйачĕсен ĕçĕсем çинчен нимĕн те пĕлмест. Пур-и вĕсем, çук-и вĕсем—хаçатшăн пурĕ-пĕрех.

„Çамрăк большевик" „комсомолĕцсем çине тимлĕн пăхмала" тесе вĕрентет вулакансене. Парти Тĕп Комитечĕн йанварти Пленумĕн решенине хаçат йанварĕн 21-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă. Çак решени тăрăх, хаçатăн чи малтан хăйĕн йăнăшĕсем çине çавăрăнса пăхмала пулнă. Хаçат иккĕ хутчен умстатйа çырса кăларнă. Анчах мартăн 26-мĕшне çитиччен „Çамрăк большевик" хăйĕн йăнăшне йышăнма иккĕленсе тăнă. Мартăн 16-мĕшĕнче те:

„П. Йашевский йулташа нимĕн сăлтавсăр тăшман шутне кĕртнипе редакци пысăк йăнăш тунă", тенипе иртсе кайать. Йашевский йулташа çеç-и халăх тăшманĕсен шутне кĕртни? Иртнĕ çулти сентабĕр, октабĕр тата декабĕр уйăхĕсенчи номĕрсене тепĕр хут пăхса тухăрха, редакцинче ĕçлекен йулташсем! Ку çеç мар, Йашевский йулташа „Çамрăк большевик" хаçат редактăрĕнчен кăларсан, „Çамрăк большевик" хаçат çамрăксемпе вулакансене чĕнсе каланине аса илĕрха! Тунă йăнăшсене çапла тӳрлетмеççĕ. Йăнăшсене хăйулăн тӳрлетмеле, комсомол организацисене те çапла тума вĕрентмеле.

Комсомол Тĕпкомĕн мартри пленумĕн решенийĕ кашни комсомолĕц çине тимлĕн пăхма, хаçатсенче комсомол пурнăçĕ тата ĕçĕ çинчен тĕплĕн çутатма хушать. „Çамрăк большевик" хаçатăн политикăла воспитани ыйтусене çивĕчрех лартмала, лайăх ĕçлекен организацисен, уйрăм работниксен опычĕсене çутатассине, начар ĕçлекенсене критиклессине вăйлатмала. Çакна тума массăпа, чи малтан, комсомолĕцсемпе тата ĕççамрăкĕсемпе тачă çыхăну тытни кирлĕ.

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем

Фашисла агрессин хумĕ çӳлерех те çӳлерех хăпарать, вăл çĕнĕ, çĕршывсене, çĕнĕ çĕрсене пырса тивет. Фашисла государствăсем хăйсен çĕршывĕнчи пурнăç йăвăрлăхĕнчен, финанс тата пĕтĕм економика хĕсĕнсе çитнинчен агрессорсем тулти политикăри авантӳрăсенче çăлăнăç тупасшăн. Буржуалă-демократилĕ çĕршывсен пĕрисен политики татăклă пулманни, вăйсăр пулни, теприсем агрессорсене, тӳрех ирĕк пани, вĕсене пулăшни вăрçă пуçлакан фашиссене хăйсен киревсĕр задачисене пурнăçа кĕртме çăмăллатать.

Англин тулти политикинче татăклă улшăну пулни, агрессорсемпе килĕшсе таталас çул çине тăни, вăрçă хăрушлăхне хирĕç коллективлă майпа кĕрешес принципе пăрахăç туни—Йевропăри событисене аталантарма пулăшакан пулнă. Германи Австрине Англипе килĕшсе туртса илнинчен халĕ нимĕн иккеленмели те çук. „Таймссем" тата Англири консервативлă ытти хаçат-журналсем темĕн чухлĕ çырсан та, вĕсем çав факта урăхла ăнлантарма пултараймаççĕ. Англири консервативлă хаçат-журналсем Германи Австрине туртса илнĕ фактă мар, сахал сарăлнă метода сивлеççĕ. Лондонри джентелментсем фашиссен „маневăрĕсемпе" кăмăллă мар. Вĕсем, епĕр мăн çул çинчи çак бандитсене „вĕрентсе çитертĕмĕр" пулĕ тесе шутланă.

* * *

Австрине—Австро-Венгрин „татăк-кĕсĕклĕ" монархин йулашки татăкне Германи фашисăмĕ пĕтерчĕ, халĕ вăл никама пăхăнман государствă пулнине пĕтерсе хучĕ.

Событисем мĕнле сарăлса пычĕç? Берхтесгаденра Гитлĕрпа Шушниг курнăçса калаçнă хыççăн, Австрин никама пăхăнса тăман государствă шутĕнчен тухса ӳкесси пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулнă. Кунта çакна аса илтерни кирлĕ: Гитлĕрпа калаçиччен малтан Шушниг Англи, Франци, Итали правительствисенчен Германи ун çине тапăнсан, çав государствăсем Австрине пулăшма пултараççи тесе ыйтнă. Çав çĕршывсен государствисем пурте пулăшма пултараймастпăр тесе ответленĕ. Итали правительстви „çук" тенĕ, мĕншĕн тесен Муссолини хăйĕн тулти политикине хăй тĕллĕн тытса пыма пултараймасть. Англи правительстви те „çук" тенĕ, мĕншĕн тесен Австрине Германи туртса илес ыйтува лорд Галифакс Гитлĕрпа курнăçса калаçнă чухнех татса панă. Франци правительстви те „çук" тенĕ, мĕншĕн тесен йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕн Дельбосăн политикне Париж мар, Лондон çул кăтартса пынă.

Шушниг Гитлĕр ыйтнисене пурне те пурнăçа кĕртрĕ, мĕншĕн тесен ăна ытти государствăсем пулăшман. Австри халăхĕнче тĕрек шырама фашист Шушниг пултарайман. Йулашкинчен Гитлĕр агĕнтне Зейсс-Инкварта правительства кĕртнĕ, Австрири гитлĕровцăсене уççăн ĕçлеме ирĕк панă, Австрине Гитлĕр çарĕсем туртса илмелли тӳрĕ сăлтав Шушниг правительстви Австри никама пăхăнса тăман государствă пулнипех хăварас ыйту тăрăх мартăн 13-мĕшĕнче пĕтĕм халăх сасăласине туса ирттерме палăртни пулнă. Унчен малтан, çакăн пек сасăласине туса ирттерме гитлĕровцăсем хăйсем хушнă, анчах Австри никама пăхăнса тăман государствă пуласси пĕтсе ларас хăрушлăх вăйланнă май: Гитлĕра хирĕçле йухăм вăйлансан, Берлинра хăраса ӳкнĕ. Мĕншĕн тесен, çакăн пек лару-тăрура пĕтĕм халăх сасăланине туса иртерни Гитлĕр агенчĕсемшĕн халăх сасăлас суккине пĕлтернĕ. Çавăнпа та Шушниг хăйĕн ăмăхĕнче мартăн 13-мĕшĕнче пĕтĕм халăх сасăласси пулать тесе каласан, Берлинра сил-тăвăл пуçласа йанă, мĕншĕн тесен, Германи фашисĕсем организацилемен пĕтĕм халăх сасăлани Германи фашисăмĕшĕн усăлă пулас суккине питĕ лайăх пĕлнĕ, Берлинран пĕтĕм халăх сасăлассине тăхтама хушса Австрине ультиматум панă. Шушниг кунпа килĕшет. Иккĕмĕш ультиматум параççĕ—Шушнига правительствă пуçлăхĕнчен кăларса сирпĕтмеле. Шушнига сирпĕтеççĕ. Австри фашисăмĕ Германи умĕнче парăнчĕ, çĕршыва сутрĕ. Германи çарĕсем Австрине кĕрсе кайнă, Шушнига арĕсленĕ.

Австрине Германи çумне çирĕплетессине фашисла саккунсăрлăхăн пĕтĕм йĕрки тăрăх „йĕркеленĕ". Ахалтен мар ĕнтĕ, пĕтĕм халăх сасăлассине туса иртерме Шушнига Муссолини васкатни çинчен калаççĕ. Çапла тунипе Итали правительстви Гитлĕр позицине вăйсăрлатасшăн пулнă. Çакна ответлесе Гитлĕр хăйĕн тусне—Муссолинине Бреннер патĕнче хăйĕн çарне Австрине кĕртсе йарса „салют" пачĕ.

Халĕ Австрире Германин 250 пин çынтан тăракан çар пур—Германин пĕтĕм çарĕн чĕрĕкĕ. Австри çарĕсене Германи çар шутне кĕртнĕ, вĕсене Германине куçараççĕ. Çĕршывра фашисла террор сарăлса кайнă. Пĕтĕм государствă аппаратне гитлĕровцăсене лартаççĕ. Гитлĕризаци—тулли утăмпа пырать.

Австрине туртса илме Гитлĕра 250 пин çынран тăракан çар кирлĕ пулнăши вара? Гитлĕра ниçта хирĕç тăни пулман. Австрине туртса илме йывăр пулман, мĕншĕн тесен ăна Англи правительствипе килĕшсе тунă. Паллах, Шушниг Германине хĕçпăшаллă вăйпа хирĕç тăма пуçтарăнман. Австрине çавăн чухлĕ нумай çар илсе пырса тултарни—вăл алхасса кайнă агрессорăн демонстрацийĕ, çав шутрах Италине хирĕçле демонстраци туни пулать. Ку вăл çĕнĕ авантӳрă тума, йутçĕршывсене туртса илме хатĕрленнине кăтартать.

Германи фашисăмĕн аллинче Чехословаки çарĕн тылне кайма, Венгрине, кăнтăра—Адриатика тинĕсне кайма çĕнĕ çул пулса тăчĕ.

Вăрçă пуçлакан фашиссем çитессинче кама çапма, кам çине тапăнма хатĕрленеççĕ? Акă халĕ пĕтĕм тĕнчери халăха хумхантаракан ыйту, ун çинчен халĕ пĕтĕм тĕнчери хаçат-журналсем сӳтсе йаваççĕ. Чехословаки халĕ тăшман çарĕ хупăрласа илнĕ условире пурăнать. Чехословакире гитлĕрла агĕнт, Гейленен Судетско-нимĕççен фашисла партийĕ Германишĕн тăрăшсах ĕçлет.

Паллах, нимĕн иккеленмели те çук, Чехословаки Германи туртса илме ĕмĕтлентерекен тутлă татăк пулса тăрать. Чехословакинче 15 мĕлйун çын пурăнать, унта промышлĕннăç тата йалхуçалăхĕ вăйлă аталаннă. Германи фашисăмĕ çулталăкне 1,6 мĕлйун тоннă тулă, 1,75 мĕлйун тоннă ыраш, 9,1 мĕлйун тоннă çĕрулми тăвакан çĕршыв çине тапăнма хирĕç мар. Анчах та кунтан ытларах гитлĕрла Германине çулталăкне вăтамран 12.243.181 тоннă кăмрăк, 15.948.767 тоннă хăмăр кăмрăк, 1.000.000 чукун, 1.560.000 тоннă хурçă паракан Чехословаки промышлĕннăçне, йулашкинчен Шкодăн çар хатĕрĕсем тăвакан чаплă савăчĕсем хапсăнтараççĕ.

Стратеги йенчен пăхсан, Чехословакине туртса илсен, Австрине туртса илнипе пĕрле Германи промышлĕннăç центăрĕсене, чикĕ хĕрринчен чылай айакка тăратса хăварать. Çакна манма йурамасть: халĕ Чехословаки чиккинчен Берлина çитме 120 миль, Лейпцига, Нюренберга çитме 65 миль, Дрездене тата Хемница çитме 25 миль çеç.

Германи фашисăмĕ Чехословаки çине тапăнма хатĕрленет. Анчах та Чехословаки—вăл Австри мар. Чехословаки çарĕнче 180.000 çын, кунсăр пуçне резервăра тăракан пĕр мĕлйун çын ытла çара мобилизацилеме пултарать. Çар лайăх вĕреннĕ, техникăпа лайăх хĕçпăшалланнă. Чехословаки халăхĕсем хăйсем никама пăхăнса тăмала мар пуласшăн çапăçма хатĕр. Вĕсем Австри империалисăмĕн пусмăрне лайăх астăваççĕ, фашиссем вĕсене мĕн парассине лайăх пĕлеççĕ.

Германи фашисăмĕ Чехословаки çине тапăнасси буржуалă-демократилĕ государствăсем чи малтан Чехословаки сойузлă догăвăр тунă Франци тата Англи мĕнле позици тытнинчен килет.

Хаçат-журналсем çырса пĕлтернĕ тăрăх, Чехословакин Англири посланникĕ Англи правительствин пуçлăхĕ Чемберлен патне пынă. Австрире пулса иртнĕ ĕçсене май Чехословаки Англи пулăшасси çине шанса тăма пултарати тесе ыйту панă. Чемберлен ку ыйту çине татăклă ответ паман. Германи правительстви хăй Чехословаки çине тапăнма шутламасть тесе калани çине Англи правительстви шанчăклăнах пăхать тенĕ. Анчах та, Чемберлен Англи правительстви Германи судет-немецĕсен ыйтуне „йĕркелеме" ыйтнине Чехословаки мĕнчухлĕ те пулин пурнăçа кĕртнине кăмăллă пулĕччĕ тесе хушса каланă.

Çапла каланине, уйрăмах Австрире пулса иртнĕ ĕçсемпе тата Англи Австри тĕлĕшĕпе тытнă позиципе танаштарсан, нийепле те хавхалантаракан тесе калама çук.

Анчах та ĕç Англипе çеç пĕтмест-ха. Тата Франци пур, вăл хăйĕн татăклă сăмахне калама пултарать. Шотан правительствинчи йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Дельбос татăклă сăмах калама пултарайман пулсан, Блюм правительствинчи йутçĕршыв ĕçĕсен министăрĕ Поль Бонкур татăклăн калассă шанма пулать.

* * *

Блюм правительстви влаçа пит те ответлă тапхăрта илчĕ. Тĕнчери лару-тăру та, çавăн пекех Франци шалти лару-тăрувĕ те уçă, татăклă политикă тытса пыма хушать. Çĕршыв ăшĕнче шултăра капитал халăх фронтне хирĕç кĕрешет; рабочи клас кĕрешсе илнисене пĕтерсе хума тăрăшать. Шотан хăй отставка тухас умĕн каланă сăмахĕнче шултăра капиталиссем мĕн тăвасшăн пулнине уççăн кăтартса пачĕ. Шултăра капиталиссем халăх фрончĕн программинче пăхнă социаллă ĕçсене, ернере 40 сехет ĕçлемелле тунине пăрахăçа кăларасшăн.

Реакци тапăннине сирсе пăрахнă. Шотан правительстви отставка тухрĕ. Анчах та вăл хăйне финанс тата промышленнăç тĕлĕшĕпе пысăк полномочи пама ыйтни—реакци халăх фронтне аркатма тата шултăра капиталиссем майлă тăракан правительствă тăвасшăн кĕрешме пăрахманнине кăтартса пачĕ.

Правительствă йĕркелеме хушнă Блюм, малтанах коммуниссене хутшăнтарса халăх фрончĕн правительстви тума хăтланчĕ. Радикалсем çакна пăсрĕç, хăйсене правительства кĕртес, Испанин „шалти ĕçĕсене хутшăнмала мар" текен политикăна, укçа-тенкĕ çӳретес ирĕклĕхне çаплипех хăварас, биржăсене контроль тăвассине пăрахăçа хăварас условисем кăларса тăратрĕç. Тĕнчери лару-тăру йăвăрланса пынă май, Блюм „—нацилĕ пĕрлĕх—Торезран пуçласа Рейнона çитиччен", урăхла каласан, коммуниссене тата ... виçелĕ сылтăм центрисла ушкăнĕсене кĕртсе правительствă тăвас пройект кăларса тăратрĕ. Йу-

1938 ҫулхи ҫураки умӗн

Йулса пырассине пӗтерме вӑхӑт

Вӑйлӑ тырпул туса илесси—агротехникӑла ӗҫсене пурнӑҫланинчен, ҫӗре ҫемҫетмели вырӑнти йапаласемпе усӑ курнинчен, пусуҫаврӑнӑшне йӗркелесе йанинчен нумай килет. Тата ҫуракине вӑрлӑхсене сурт-ласа, йалхуҫалӑх машинӗсене йусаса, вӑйлӑ лашасемпе тухмала.

Анчах, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Уй-Пилемӗчри „Опыт" колхоз (преҫедателӗ Йунусӑв йулташ) пайанхи куна ҫитсе те вӑрлӑхсене суртламан, суртсӑр вӑрлӑхсене улӑштарман. Ҫӗре ҫемҫетмели вырӑнти йапаласене те ҫителӗклӗ хатӗрлемен. Суперфосфат тата кали тӑварӗ 24 центнер халӗ те Вӑрнартан турттарса килмен. Йалхуҫалӑх машинӗсене те йусаса пӗтермен. Колхозӑн тимӗрҫ пур пулин те—„кӑмрӑк ҫук" теҫҫӗ. Бригадӑсем вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешме социалисӑмла ӑмӑртӑва хутшӑнман. „Опыт" колхоз нихӑш колхозпа та ӑмӑртӑва тухман.

Ӗҫмӗлти „Ударник" колхоз та ҫуракине начар хатӗрлӗнсе пырать. Колхозӑн сортировкӑ пур пулин те, вӑрлӑхсене суртласа пӗтермен. Кунта та социалисӑмла ӑмӑрту ҫинчен шутламаҫҫӗ. „Ударник" колхозра икӗ уйӑх хушшинче 5 бригадире улӑштарнӑ, ҫавӑнпа ҫуракине хатӗрленесси кайа йулса пырать. Вӑтӑр лаша валлӗ кӳлмели таврашсем ҫитмеҫҫӗ. Лашасене начар пӑхаҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах районра ҫуракине хатӗрленсе ҫитнӗ колхозсем те нумай. Сӑмахран, Вӑрманкассинчи „Кульӑтурӑ" колхоз ҫуракине хатӗр.

Сӗнтӗрвӑрри районӗ Куславкка районӗпе гектартан 100 пӑтран кайа мар тырпул туса илессишӗн ӑмӑртӑва тухнӑ. Ҫавна шута илсе „Кульӑтурӑ" колхоз „Хӗрлӗ Сормӑ" колхозпа ӑмӑртса ӗҫлет, колхозниксем вӑтам шутпа гектартан 120 пӑт, уйрӑм участкӑсенчен 200—250 пӑт тырӑ туса илессишӗн пӗрпӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ӑмӑртура уйрӑмӑнах иккӗмӗш бригадӑ (бригадир Крылов йулташ) малта пырать.

В. Ҫидйаков, С. Журавлӗв.

Йӗпреҫсем вӑрлӑх ҫинчен маннӑ

Тырпул тухӑҫне ӳстерес ӗҫре вӑрлӑх тӗп вырӑнта тӑни пурин-шӗн те паллӑ. Анчах Йӗпреҫ районӗнче таса вӑрлӑхшӑн тӑрӑшса ӗҫлени сисӗнмест-ха. МТС ҫумӗнчи вӑрлӑх лабораторийӗ вӑрлӑхсен пахалӑхне тӗрӗслес тӗлӗшпе чӑтма ҫук йапӑх ӗҫлет. Лабораторине 66 колхозран вӑрлӑхсем мӗнле шӑтнине тӗрӗслеме тӑратнӑ. 10 колхозӑнне ҫеҫ тӗрӗсленӗ. Ҫавна пула районри чылай колхозсем ҫуртри вӑрлӑхӗсем мӗнле шӑтнине пӗлмеҫҫӗ те.

Вӑрлӑхсене суртлас ӗҫ те начар пырать. Ейпеҫ йалсоветӗнчи Молотӑв йачӗпе тӑракан колхозра вӑрлӑх суртлама пуҫӑнман та. Апакасси йалсоветне кӗрекен „Строитель" колхозра 94 центнер ҫуртри вӑрлӑхӗнчен тулӑ вӑрлӑхне ҫеҫ 20 центнер суртланӑ. Хӑшпӗр колхозсем, туман ӗҫех тунӑ тесе райҫӗрҫӗ пайне суйа сведенисем тӑратса, хӑйсене хӑйсем улталаҫҫӗ. Мӑн Апакас йалсоветне кӗрекен колхозра:—Епӗр вӑрлӑхсене тахҫанах суртласа пӗтернӗ,—тесе лӑпланса пурӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах „Пролетарий" колхозран ӑмӑрту договӑрне тӗрӗслеме пырсан, 145 центнер вӑрлӑха пӗтӗмпех тепӗр хут суртламаннине палӑртнӑ. Ҫавӑн пекех Свашкина йалсоветне кӗрекен „Карсный урожай" колхозра та 106 центнер ҫуртри вӑрлӑхне тепӗр хут суртламала. „Победа" тата „Красный Водник" колхозсенче те вӑрлӑх суртлаcси чӑтма ҫук йапӑх пырать.

Чылай колхозсенче кирлӗ пек лайӑх вӑрлӑхсем ҫителӗксӗрри палӑрать. „Интернационал" колхозӑн тулӑ вӑрлӑхӗ кирлӗ чухлӗ лайӑххи мар. Ҫитменнине пӗр килограм вӑрлӑх ҫинче 500 пӗрчӗ таран ҫумкурӑк вӑррисем пур. „Красный партизан" колхозра та вӑрлӑхсене йачӗшӗн кӑна суртланӑ. Ку вӑхӑта ҫитиччен вӑрлӑхсене суртласа пӗтерме пур условисем те пулнӑ. Трийӗрсем те ҫителӗклӗ. Анчах трийӗрсемпе ҫителӗклӗ усӑ курман. Хумпуҫ Патӑрйелӗнчи „Правда" колхозра трийер чылай вӑхӑт хушши нимӗн ӗҫлемесӗр ларать.

Ҫул пасӑласси нумай йулмарӗ ӗнтӗ. Апла пулин те районра суртсӑр вӑрлӑхсене суртлипе улӑштарса ҫитермен. „Х лет Октября" колхозӑн Буденный йачӗпе тӑракан колхозран сӗлӗ тата ытти вӑрлӑхсене 176 центнер улӑштарса килмеле пулнӑ. Халӗ пӗр центнер та улӑштарман. Ку колхоз ҫуракине ытла та начар хатӗрленет.

Районӑн пӗтӗмпе 960 центнер „Капитал" суртлӑ пӑрҫа вӑрлӑхне Канашри базӑран, „Виктория" суртлӑ вӑрлӑха 40 центнер Вӑрнарти базӑран кӳрсе килмеле пулнӑ пулсан, пӗр пӗрчӗ те кӳрсе килмен. Колхозсем государствӑн суртлӑ вӑрлӑх фондӗнчен панӑ вӑрлӑха турттарас ӗҫе ҫак кунсенче ҫеҫ тытӑнчӗҫ. Ҫавӑн пекех района панӑ план тӑрӑх, Канашри базӑран 119 центнер йасмӑк вӑрлӑхне улӑштарса килмеле. Канашран:—Пирӗн базӑра йасмӑк вӑрлӑхӗ ҫук, пуласси те паллӑ мар,—тесе пӗлтернӗ.

Т. Майорӑв.

Лашасене йапӑх пӑхаҫҫӗ

Вӑрман Кӑршкӑри „Бойевик" колхозри (Сӗнтӗрвӑрри р.) Антонӑв коньухӗ иртнӗ ҫулта „Маньӑкӑ" йатлӑ кӗсрене йӑвӑр ӗҫе кӳлсе хӑмпӑрахтарнӑ та ытти коньухсем сиқчен тыхана пытарнӑ.

Вӑл хӑй пӑхакан кӗсресене ӑратлӑ айӑрсемпе чуптарас вырӑнне, ӑратсӑр айӑрсемпе чуптарнӑ. Антонӑв хӑй тума шутланӑ ӗҫсене пурнӑҫлас тӗлӗшпе Воробйов, Степанӑв коньухсене хӑйпе пӗрле йавӑҫтарнӑ. Вӗсем лашасене тӑрантарма панӑ сӗлле вӑрттӑн сутса ерех ӗҫнӗ. Лашасене пӑхас вырӑнне мухмӑрла ҫӳренӗ. Ҫавӑнпа та, колхоз лашасем ывӑннипе, иртнӗ ҫулта ҫураки ӗҫӗпе районра чи кайа йулчӗ.

Правленинче ӗҫлекенсем кун пирки нимӗнле мерӑ та йышӑнман.

Н. Никифӑрӑв.

лашкинчен Блюм 1936 ҫулта хӑй тунӑ правителствӑ йеверлӗ правителствӑ тунӑ. Правителствӑна социалиссем 15, радикалсем 15, Бонкур ушкӑнӗнчисем 2 ҫын кӗнӗ. Урӑхла каласан, правителствӑ радикалсемпе социалиссенчен тӑрать, вӗсене коммунисем пулӑшаҫҫӗ.

Францин ҫӗнӗ правителстви палатӑра депутатсен пысӑк пайӗ ҫине тайанать, Шотан правителствин тулти политикине тӳрлетме пултарать. Правителствӑ Францине ун ҫине фашисла агрессӑрсем тултан тата шалтан тапӑнассинчен те ҫӑлса хӑварма пултарать.

Вӑхӑт ҫавӑн пек, фашисла агрессӑрсен хумне чарма миршӑн тӑракан ҫӗршывсен хӑйсен пӗтӗм вӑйне хумала.

* * *

Англин тулти политики татӑклӑнах фашисла агрессӑрсене пулӑшас йенне кусни Австрири ӗҫӗнче ҫеҫ мар, Испанири ӗҫӗнче те уҫҫӑнах палӑрчӗ. Чемберлен Испани ыйтуне „хутшӑнмала мар комитетра татса памала" тесе панӑ лозунгпа усӑ курса, интервентсем—Германипе Итали фашисӗсем Испанине ҫӗнӗрен нумай ҫар, ҫар хатӗрӗсем, авиаци нумай йанӑ, Белӗчитӑран пуҫласа Монталӗбана ҫитиччен сарлака фронтпа наступлени тума тытӑннӑ. Интервентсем республиканцӑсен ҫарӗсене хӗсме пултарчӗҫ. Германи интервенчӗсем Бреннер урлӑ кайакан ҫӗнӗ ҫулпа усӑ курса, Испанине ҫӗнӗрен ҫар йаҫаҫҫӗ.

* * *

Пысӑк агрессорсем хыҫҫӑн, пӗчӗккисем кайаҫҫӗ. Польшӑ Литва чикки хӗрринче провокацилӗ ӗҫ туса Польшӑпа Литва чикки хӗррине ҫар илсе пырса тултарчӗ, Польаксем Вильно хулине туртса илнине тата ыттисене йышӑнма хушса Литвана ультиматум пачӗҫ. Польшӑ тунӑ провокацилӗ ӗҫ Берлинра тӗплӗн шухӑшласа тунӑ планӑн пӗр пайӗ пулнинчен нимӗн иккӗленмели те ҫук. Йутҫӗршывсенчи хаҫатсем Германипе Польшӑ Литвана вак укҫа вырӑнне шутлаҫҫӗ тесе ҫыраҫҫӗ. Германи фашисӗсем Польшӑран Данциг тата Польшӑ коридорӗ текеннине туртса илес тесе Польшӑна Литвана туртса илме хушаҫҫӗ.

* * *

Интервентсем Испанире тапӑнса пыни, Германи Австрине туртса илни, Чехословаки ҫине тапӑнма хатӗрленни, Польшӑ Литвана хӑратни—ҫаксем пурте агрессӑрсене ирӗк паман результачӗ. Англи политики агрессӑрсемпе килӗшсе татӑлма ҫул шырать, ҫакна тума пӗчӗк ҫӗршывсене пӗтерсе хурассине ҫеҫ мар, Францишӗн пысӑк хӑрушлӑх туса хума хатӗр. Ҫак вилӗмлӗ политикӑн хӑрушлӑхне Англи хӑй чи малтан тӳсӗ.

Миршӑн тӑракан ҫӗршывсене агрессӑрсене хирӗҫ татӑклӑн тӑни ҫеҫ, тӗнче вӑрҫине чӗртсе йама мӗн кирлине пурне те тӑвакан урса кайнӑ фашиссене чарма пултарать. Ҫак вӑрҫӑ пушарӗнчен Английе агрессӑрсем умӗнче чакни, агрессӑрсемпе килӗшӳ туни ҫӑлса хӑварма пултараймасть.

Йа. Виктӑрӑв.

Улатӑрти Краҫин йачӗпе тӑракан I-мӗш № вӑтам шкулти VIII-мӗш клас Н. М. Жевалков преподавателӗ физикӑпа вӗрентет.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Суйлав саккунне вӗренмели кружоксем

Куславкка комбинатӗнчи цехсенче РСФСР тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечӗсене суйламали Положенисене вӗренме кружоксем организациленӗ. Йавӑҫ каскалакан цехра виҫӗ кружок ӗҫлет. Пӗр кружокӗпе комбинатра стахановла йухӑма пуҫарса йанӑ В. Никифӑрӑв йулташ йертсе пырать. Хальхи вӑхӑтра В. Никифӑрӑв виҫӗ заньати туса иртернӗ. Суйлав Положенине вӗреннисӗр пуҫне тата В. Никифорӑв рабочисене хаҫатсем вуласа парать, рабочисем пурӑнакан ҫуртсенче тӗне хирӗҫ калаҫусем туса иртерет.

Пушарпа кӗрешекен командӑ ҫумӗнче виҫӗ кружок организациленӗ. Кружоксемпе Ананйӗв, Белов, Лукӑв агитатӑрсем йертсе пыраҫҫӗ. Ананйӗв йулташ РСФСР Верховнӑй Советне суйламали Положенипе вӗренессипе 6 заньати, Чӑваш АССР Верховнӑй Советне суйламали Положенине вӗренессипе виҫӗ заньати туса иртернӗ. Ананйӗв йулташ кашни кунах бойецсем хушшинче хаҫатсем вуласа парать.

Лесцехра организациленӗ кружокпа стахановкӑ-комсомолкӑ Йе. Морскова йулташ йертсе пырать. Ку тарана ҫитсе кружок виҫӗ заньати туса иртернӗ.

Комбинатри хӑшпӗр цехсенче кружоксем организацилениччех лӑпланса ларнӑ. Чӗрӗ таварсен складӗнче ӗҫлеме Йевҫейӗв комсомолӗца ҫирӗплетнӗ. Вӑл пӗр заньати те иртӗрмен. Комбинатри управленинче ӗҫлекенсем хушшинче те политикӑла агитаци ӗҫне йӗркелемен.

И. Константинӑв.

Аш-какай планне кӗске срукрах тултармала

Куславкка районӗ государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу тӑратас плана тултарас тӗлӗшпе чӑтма ҫук начар ӗҫлет. Кунта пайанхи куна 1937 ҫулхи аш-какай планне 85 проц., сӗт-ҫу планне 82 проц. ҫеҫ тултарнӑ. 1938 ҫулхи I-мӗш квартӑл планне пӗр йалсовет та, пӗр колхоз та тултарман. Хӑшпӗр йалсоветсенче, колхозсенче государствӑ умӗнчи парӑмсене парасси уйрӑмӑнах начар пырать. Карач йалсоветӗнче 1937 ҫулхи плана 67 проц. тултарнипех лӑпланса ларнӑ.

Колхозри таварлӑ фермӑсем „епӗр памали ӗнесене, вӑкӑрсене самӑртма хупнӑ-ха" тесе памасӑр тытса тӑраҫҫӗ. Колхозниксем хушшинче те аш-какай тӑратас ӗҫ начар пырать. Государствӑ умӗнчи обйазателствӑсене пурнӑҫлассипе партипе совет организацисем йертсе пымаҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗм ӗҫе хатӗрлев комитечӗсем тӑвасса шанаҫҫӗ. Хатӗрлев комитечӗ ку ӗҫпе ҫителӗклӗн ӗҫлемен. Районта аш-какай планне тултарас тӗлӗшпе ӑнлантару ӗҫӗ те начар. Государствӑ колхозниксемпе йединоличниксене пур йенчен те пысӑк льготӑсем парать. Йалти агитатӑрсем пысӑк льготӑсем пани ҫинчен тата аш-какай ӑҫта кайни ҫинчен ӑнлантарас ӗҫе кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ.

Государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу тӑратассипе йалхуҫалӑх налогӗ пекех обйазателнӑй йӗркепе, кӑтартнӑ срукра тултарса пымала.

Аш-какай планне срукра тултарас ӗҫре выльӑхсене илекен пунктсем те чылай пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Районра икӗ пункт. Анчах вӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ, уйрӑмах Карач йалӗнчи пунктӑн ӗҫӗсем йапӑх. Кунти приймщик Ҫеменӑв йулташ пӗр кун ӗҫлет те 3—4 кун канать. Ҫапла вара выльӑхсем пама пыракансен кайала ҫаврӑнса кайма тивет. Мартӑн 16-мӗшӗнче Прамнек йачӗпе тӑракан колхозран Саваҫкин йулташ государствӑна пама 5 вӑкӑр илсе пынӑ. Ҫеменӑв приймщик: „халӗ манӑн вӑхӑт ҫук", тесе вӑкӑрсене илмен. Кун пек тӗслӗхсем татах та пур.

Куславкка районӗн аш-какай планне тултарма пур условисем те пур. Колхозсемпе колхозниксен выльӑх-чӗрлӗхе усрама выльӑх апачӗ ҫителӗклӗ. Иртнӗ ҫулпа танлаштарсан кӑҫал выльӑх-чӗрлӗхсен шучӗ те чылайах ӳснӗ, тата аш-какай парас план та пысӑк мар. Плана вӑхӑтра тултарма тӑрӑшса ӗҫлени кирлӗ.

П. Перлов.

Татӑклӑ улшӑну тумала

Трак районӗнче, государствӑна аш-какай тӑратас ӗҫ питӗ йапӑх пырать. Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ йышӑннӑ постановлени тӑрӑх 1937 ҫулта памала пулнӑ аш-какайа мартӑн 15-мӗш тӗлне тултармала, тесе кӑтартса хӑварнӑччӗ. Анчах районри хӑшпӗр йалсоветсенче 1937 ҫулхи аш-какай планне тултарас тӗлӗшпе халӗ те начар ӗҫлеҫҫӗ.

Акӑ, Йеншик-Чуллӑ йалсовечӗ—68,9, Именевӑ—76,8 проц. ҫеҫ тултарнӑ. Иртнӗ ҫулхи аш-какай хатӗрлес плана районӗпе 93 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Хӑшпӗр йалсоветсенчи активиссем ку ӗҫре хӑйсем чӑрмантарса пыраҫҫӗ. Хусакасси йалсовет ҫекретарӗ Н. Сорокин, „Комбайн" колхоз счетовочӗ С. Алексҫейӗв 1937 ҫулшӑн пӗр килограм та паман. Ҫавӑн пекех Итмар йалсовет ҫекретарӗ Лапухин, Упи йалсовет преҫедателӗ Йефимӑв 1937 ҫулшӑн аш-какай парса татман.

Чадукасси йалсовет ҫекретарӗ П. Романӑв чӑхӑ ашӗ панӑ квитанци ҫине ӗне панӑ тесе ҫырса государствӑна улталаса ытлашши укҫа илнӗ.

Ҫавӑн пек ҫитменлӗхсем кӑҫалхи аш-какай тӑратас обйазателствӑсене пурнӑҫлас ӗҫре те чӑрмантараҫҫӗ.

Районӗпе 1938 ҫулхи аш-какай хатӗрлес ҫулталӑк планне 12 проц., квартӑл планне 35 проц. ҫеҫ тултарнӑ. Йалсоветӗнчи хатӗрлев ҫекцисемпе райӗҫтӑвком тата районри хатӗрлев организацисем йертсе пымаҫҫӗ.

Медикасси йалсовечӗ кӑҫалхи аш-какай хатӗрлес ҫулталӑк планне—4,7 процент, Алпахтинӑ—6,5 проц., Чадукасси йалсовечӗ 2,5 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Тӳрех калас пулать, ҫак тӗслӗхсем массӑ хушшинче ӑнлантару ӗҫӗ начар пыни ҫинчен калаҫҫӗ.

Аш-какай хатӗрлес плана тултарас ӗҫре татӑклӑ улшӑну тумала.

Мак. Иванов.

Стахановкӑна ҫменӑ маҫтӑрне куҫарчӗҫ

ТУРХАН. Липӑвкӑри Ленин йачӗпе тӑракан промысла ертелӗнчи турпассем тӑвакан цехри Романӑв йертсе пыракан ҫменӑ чылай вӑхӑт хушши йапӑх ӗҫленӗ. Ҫменӑ плана тултараймаи. Романӑв рабочисене пример кӑтартас вырӑнне, хӑй ӗҫ дисциплинине пӑсса пынӑ, ӗҫе ӳсӗр пуҫпа тухни, ӗҫе вӑхӑтра пыманни унӑн час-часах пулкаланӑ.

Нумай пулмасть правлени Романӑва ҫменӑ маҫтӑрӗнчен кӑларса, ун вырӑнне ертеле чылай вӑхӑт хушши ӗҫленӗ М. Воробйова стахановкӑ-комсомолкӑна лартрӗҫ. Вӑхӑт нумайах та иртмерӗ, Воробйова йулташ ӗҫре пысӑк улшӑну туса, хӑйӗн пултарулӑхне кӑтартрӗ. Ҫак кунсенче Воробйова йулташ йертсе пыракан ҫменӑ нормӑна 110—130 процент тултарса пыма пуҫларӗ. Рабочисем хушшинче ӗҫ дисциплини ҫирӗпленчӗ. Ӗҫ вырӑнне тӗрӗс организациленӗ.

Ӗҫ хыҫҫӑн канашлусем туса иртереҫҫӗ. Воробйова йулташ ӗҫ опычӗсем ҫинчен рабочисене каласа ӑнлантарать, вӗрентет. Ҫавӑншӑн ӑна пурте йуратаҫҫӗ, хисеплеҫҫӗ.

Иван Мӑрзай.

Совет кӗнеки тата унӑн вулаканӗ

Халӑхӑн культурлӑхне вӑл мӗн чухлӗ кӗнеке тата мӗнле кӗнекесем вуланӑ тӑрӑх виҫсен,—ку чӑн та тӗрӗс виҫе,—пирӗн совет халӑхӗ тӗнчери чи культурлӑ халӑх пулса тӑни курӑнать.

Хашпӗр тӗслӗхсем. Краснодар крайӗнчи Газырти тӗш-тырӑ совхозӗн библиотекинчӗ 2000 томран ытла кӗнеке пур. Ҫав кӗнекесене совхозри токӑр Сивоволӑв йулташ пӗтӗмӗшпе пекех вуласа тухнӑ. Библиотекӑри мӗн пур илемлӗ литературӑна токарнӑй маҫтерскойӑн пуҫлӑхӗ Гугменнӑй вуланӑ. Совхозпа унӑн уйрӑмӗсенче ӗҫлекен мӗн пур ҫитӗнӗ ҫынсем Н. Островскийӗн кӗнекисене вуласа тухнӑ. Мӗн пур хут пӗлекен ҫынсем Пушкинӑн тата Шолохӑвӑн кӗнекисене вуланӑ.

Кӳршӗри Тихорецк совхозӗнче мӗн пур рабочисемпе служӑщисем „Цусима", „Уленшпигель", „Братья Карамазовы" произведенисене тата Майаковскин сӑввисене вуласа тухнӑ.

Питӗ нумай ыйтаҫҫӗ совхозра политикӑлӑ литературӑ. Сталин йулташӑн сӑмахӗсем, Конституци ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем кашни рабочипе служӑщийӗн пекех пур. Нумайӑшӗн библиотекинче „Ленинисӑм ыйтӑвӗсем" кӗнекене куратӑн.

Акӑ Мускав облаҫӗнчи Михнева йалӗ. Библиотекӑран 1.414 ҫын кӗнеке илсе тӑрать, вӗсенчен шкул ачисем 510 ҫын. Йалти чи активлӑ вулакан 53 ҫулхи колхозницӑ Т. Д. Обухӑвӑ пулса тӑрать.

—Вулама вӑхӑт ҫук тени тӗрӗс мар,—тет вӑл.—Вулас килсен вӑхӑт йаланах тупма пулать.

Газырпа Михнева ҫыннисем— совет вулаканӗсем. Вулакансен йышӗ мӗнле ӳссе пынине ҫак цифӑрсем те аван кӑтартса параҫҫӗ.

Социалисӑмла Аслӑ революци пулнӑранпа ҫак иртнӗ 20 ҫул хушшинче, пирӗн, туллин шута илмесӗр каласан та, 6 мӗлйард екземплйар ытларах кӗнеке кӑларнӑ. Ҫав кӗнекесене листаж йенӗпе илсен, 30 мӗлйард листран та иртет.

Кӗнеке кӑларас хисепӗпе ССР Союзӗ тӗнчере пӗрремӗш вырӑн йышӑнать. Хӗвеланӑҫ Йевропӑри „культурлӑ" ҫӗршывсенче, вӗсенче ҫеҫ мар—Америкӑра та, кӗнеке кӑларасси ҫулран-ҫул чакса пырать.

Ҫапла, Америкӑра кӑларнӑ кӗнеке йачӗсен хисепӗ 1913 ҫулхи 12.200 йатран 1936 ҫулта 10.400 ҫити, Германире—23.200-тен,—19,700 ҫити, Францире—11.500-тен—10.300 ҫити чакнӑ. Ҫав вӑхӑтрах ССР Союзӗнче епӗр кӗнеке кӑларас ӗҫ хӑватлӑн ӳссе пынине куратпӑр.

Пирӗн 1913 ҫулхи 26.174 уйрӑм кӗнеке йатӗнчен 43.300 ҫити ӳснӗ. ССР Союзӗнче кӗнекесем пӗтӗмпе 111 чӗлхепе тухнӑ.

Революциччен нумай халӑхсен хӑйсен кӗнеки пулман. Сӑмахран Таджикистанпа Киргизире 1913 ҫулта пӗр кӗнеке те тухман. 1936 ҫулта Таджикистанра 300 йатлӑ кӗнекесем, пӗтӗмпе 3 мӗлйун екземплйар, Киргизире 200 йатлӑ кӗнекесем, пӗтӗмпе пӗр мӗлйун екземплйар ытла кӑларнӑ.

Туркменире 1913 ҫулта 4 кӗнеке кӑларнӑ, 1936 ҫулта ҫакӑнтах 300 йатлӑ кӗнекесем, пӗтӗмпе 2 мӗлйун екземплйар ытла тухнӑ.

Нацилӗ кӗнеке патша Раҫҫийӗнчи мӗн пур тиражра 7 процент кӑна шутланса тӑнӑ, 1936 ҫул тӗлне нацилӗ кӗнекен хисепӗ ССР Союзӗн пӗтӗм кӗнеке тиражӗнче 23 процента ҫити ӳсрӗ.

Патша Раҫҫийӗнче нацилӗ кӗнеке продукцийӗн чи пысӑк пайӗ—вӑл религи пулнӑ. Нацилӗ чӗлхесемпе религи литератури кӑларассине патша правителстви пур майсемпе те хӗтӗртсе пынӑ, ҫапла май вӑл тӗттӗмлӗхпе тӗн сӗрӗмне тата ытларах сарма ӗмӗтленнӗ.

Пирӗн ҫӗршывра марксисӑм-ленинисӑм классикӗсене нумай мӗлйун ҫын вулать. 1923 — 1927 ҫулсенче марксисӑм-ленинисӑм классикӗсене 304,4 мӗлйун листалӑх кӑларнӑ пулсан, пӗррремӗш пилӗкҫуллӑхра ку хисеп 988,5 млн. листана ҫити, 2-мӗш пилӗкҫуллӑхӑн 4½ ҫулӗнче 1.802,3 млн. листана ҫити ӳсрӗ.

Пӗр 1936 ҫулта кӑна марксисӑм-ленинисӑм классикӗсен произведенисене 693 йатпа пӗтӗмпе 43 млн. екземплйар кӑларнӑ, вӗсенчен 26.700 пин екземплйарӗ халӑхсен йуратнӑ ҫулпуҫӗ Сталин йулташ ҫырнӑ произведенисем.

1936 ҫулта чи нумай саланнӑ кӗнекесенчен Сталин йулташӑн Пӗтӗм Союзри Советсен Чрезвычайлӑ VIII-мӗш Сйеҫӗнче тунӑ доклачӗ пулса тӑчӗ. Вӑл доклада пӗтӗмпе 25 чӗлхепе 15.400 пин екземплйар кӑларнӑ. Мӗлйуншар екземплйарӑн саралакан „Вопросы ленинизма" кӗнекене ыйтакансен йышӗ ҫулсеран ӳссе пырать.

Агротехникӑлӑ кӗнекесен тиражӗ 1913 ҫултипе танлаштарсан 10 хут ытларах ӳсрӗ, 1936 ҫулта ку йенӗпе пӗтӗмпе 32 мӗлйун екземплйар кӗнеке кӑларнӑ.

Илемлӗ литературӑ вулакансен хисепне кӑтартакан цифӑрсем те ҫавнашкалах питӗ пысӑк. Илемлӗ литературӑн тиражӗ 1913 ҫулхи 15,9 мӗлйун екземплйартан 1936 ҫулта 90,1 млн. екземплйара ҫити ӳсрӗ.

Куптан кӑшт та кайра тӑмасть ССР Союзӗнче техникӑла литературӑ кӑларас ӗҫ те. Капиталисӑмла ҫӗршывсенче економикӑ кризисӗ, паллах, техникӑла литературӑ кӑларас ӗҫе тивмесӗр хӑвармарӗ. Германире, Италире, Францире, ҫавӑн пекех Америкӑра та, техникӑла литературӑ кӑларасси ҫулран-ҫул чакса пырать. ССР Союзӗнче техникӑла литературӑ тиражӗ 1913 ҫулхи 1.200 пин екземплйартан 1936 ҫулта 50 млн. екземплйара ҫити хӑпарчӗ. Кӗнеке йачӗсене уйрӑмӑн илсен, ҫулталӑкне 900 йат вырӑнне 10.300 уйрӑм йат тухакан пулчӗ.

Пирӗн тӑван ҫӗршыв чечекленсе пыни, ӗҫҫыннисен пурнӑҫӗ пуйанланса, культурланса пыни социалисӑм строителствинче партин шанчӑклӑ пулӑшаканӗ пулса тӑракан совет кӗнекине малала ӳсме кӑлама ҫук анлӑ ҫул уҫса парать.

(ТАСС).

Шкулти ӗҫе вӑйлатмала

Вӗренӳ ҫулӗн пуҫамӗшӗнче Шераутри (Тӳрхан р.) ҫитӗннисен туллимар вӑтам шкулӗнче 55 ҫын вӗренетчӗҫ. Йулашки вӑхӑтра 42 ҫын кӑна вӗренеҫҫӗ, ыттисем тӗрлӗ сӑлтавсемпе вӗренме пӑрахнӑ.

Вӑрман шкул ҫывӑхӗнчех. Апла пулин те шкул 1937—38 вӗренӳ ҫулӗ валли вутӑ ҫителӗклӗ кӳрсе хатӗрлеймен. Ҫавӑн пирки те хӗллехи сивӗ кунсенче классене хутман. Шкула таса тытмаҫҫӗ. Кӗнекесем ҫителӗксӗр, ик-виҫ ҫынна пӗрер кӗнеке кӑна тивет. Ҫтенасем ҫине тусан тулса ларнӑ.

Учителсем уроксене хатӗрленсе пымаҫҫӗ. Ҫакӑн пирки те хӑшпӗр вӗренекенсем уроксенче учителсем мӗн вӗрентнине ӑнланмасӑр йулаҫҫӗ. Уйрӑмӑнах вырӑс чӗлхи урокӗнче ӑнланма йӑвӑр. Мӗншӗн тесен, вырӑс чӗлхипе вӗрентекен Бахмисӑв уроксене хатӗрленсе пымасть. „Бессоюзное предложение" темӑна ҫырнӑ чухне вӗренекенсем пӗр предложенинчех темиҫе йӑнӑш турӗҫ.

Ҫакӑн пекех историпе вӗрентекен Николайӗв та уроксене тӗплӗн хатӗрленсе пымасть. Вӗренекенсем унӑн урокӗнчен сахалтарах ӑнланаҫҫӗ.

Шкул директӑрӗ Тарасӑв шкулти вӗренӳ пахалӑхне хӑпартас ыйтупа учителсене пухса производствӑлӑ канашлусем туса иртермест. Вӗренекенсем шкула йапӑх ҫӳреҫҫӗ. Вӑл, паллах вӗренӳпе воспитани ӗҫӗ шкулта ҫителӗксӗрринчен килет. Акӑ нойабӗрпе декабӗр уйӑхӗсенче 86, 87 процент, йанварпе феврал уйӑхӗсенче 62—63 процент кӑна ҫӳренӗ.

Ҫак ҫӳлте кӑтартнӑ ҫитменлӗхсене кӗске вӑхӑтрах пӗтермеле. Кашни учителӗн уроксене план тӑрӑх лайӑх хатӗрленсе пырса, вӗренекенсене ҫителӗклӗ воспитани парассишӗн тӑрӑшмала.

В. Ҫмирнов.

Каникул кунӗсем

Шкул ачисен ҫуркуннехи каникулӗ пысӑк хаваслӑхпа иртет. Каникулӑн малтанхи кунӗсенче вӗренекен ачасем валли театрсем, клубсем, кинотеатрсем, радио т. ыт. культурӑлӑ учрежденисем те лайӑх ӗҫсем туса иртерчӗҫ.

Чӑваш радиокомитечӗн ача-пӑча вещанийӗ каникулӑн малтанхи кунӗнче—мартӑн 24-мӗшӗнче — Томпсон ҫырнӑ „Джек—гроза Таллакских гор" йатлӑ йумаха радиопа панӑ. Мартӑн 25-мӗшӗнче Аслӑ Сталин ҫинчен Иван Ивник ҫырнӑ „Телей ҫулӗ" йатлӑ произведенийе панӑ, мартӑн 26-мӗшӗнче Шупашкарти пӗрремӗш номӗрлӗ вӑтам шкулта 7-мӗш класра вӗренекенсем каникула мӗнле иртерни ҫинчен тата каникул вӑхӑтӗнче папанинцӑсене хисеплесе пухува мӗнле иртермели ҫинчен каласа панӑ, концерт пулнӑ. Ӗнер ача-пӑча передачинче аслӑ писателӗ Горький ҫинчен каласа кӑтартрӗҫ, вӑл ҫырнӑ „Валеҫни" калава радио тӑрӑх пачӗҫ. Пайанхи тата ыранхи передачӑсенче пӗтӗмпех Макҫим Горький ачасене валли ҫырнӑ произведенисене параҫҫӗ.

Ача-пӑча театрӗ мартӑн 30-мӗшӗнче радио тӑрӑх „Зямка Копач" йатлӑ постановкӑ пама хатӗрленет.

Академи театрӗ мартӑн 24-мӗшпе 26-мӗшӗсенче ачасем валли Гогольӑн „Ревизор" пйессине лартса панӑ. Ҫак икӗ постановкӑра пӗтӗмпе 825 ача пулнӑ.

Ача-пӑча театрӗ „Зямка Копач" пйесӑпа икӗ постановкӑ панӑ, пӗтӗмпе 550 ача курнӑ. Мартӑн 27-мӗшӗнче ҫак постановках Шупашкар районӗнчи йалти ачасене кӑтартнӑ. Мартӑн 30-мӗшӗнче „Красная шапочка" йатлӑ постановкӑ пама хатӗрленет.

Кино театӑр каникулӑн малтанхи кунӗсенче вӗренекенсене „Граница на замке", „Серго Орджоникидзе", „Если завтра война" йатлӑ кинокартинӑсем кӑтартнӑ, вӗсене пӗтӗмпе 2.800 ача курнӑ. Ҫитес кунсенче „Глубокий рейд" кинокартинӑ пулать.

Лотерей билечӗсем илеҫҫӗ

Канаш районӗнчи йалхуҫалӑх механизаци шкулӗнче вӗренекен курсантсем пурте Осоавиахимӑн 12мӗш лотерей билечӗсене ҫырӑнса илчӗҫ. Сӑмахран, Халил Йафизӑв, С. Йакӑвлев, Ҫтепанов йулташсем вуншар-тенкӗлӗх ҫырӑнчӗҫ. Осоавиахим пуҫламӗш организацин ҫекретарӗ Григорйӗв йулташ тата Осоавиахим активӗсем тӑрӑшса ӗҫленипе кӗске вӑхӑтрах лотерей билечӗсене 500 тенкӗлӗх сарчӗҫ.

Г. Тихӑнӑв.

Китайри вăрçă

Хенаљ провинцин çурçĕр пайĕнче тата Хебей провинцин кăнтăр пайĕнче Китай çарĕсем партизанла вăрçан тактикипе анлăн усă курасçĕ. Вĕсем унта пурăнакан халăхсемпе тата партизансен отрйачĕсемпе пĕрле вăрçаççĕ. Китай çарĕсем йулăшки вăхăтра Хебей провинцинчи Чан-йуаљ районне йапонĕцсенчен тасатнă.

Шаљси провинцин çурçĕрпе хĕвеланăç пайĕнче Китай çарĕсем Хељуй йатлă хулана илнĕ тата Хуанхе йуханшывĕн хĕвелтухăç çыранĕ патĕнчен йапонĕцсене хăваласа йанă. Мартăн 25-мĕшĕнче çав йуханшывăн кăнтăр çыранĕнче Йапонин 300 çынлă отрйачĕ пуррине палăртнă. Китайĕцсем çак отрйада хупарласа илнĕ те, ăна йăлтах пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 25-мĕшĕнче Йапони çарĕсем Шаљси провинцин кăнтăрпа хĕвелтухăç пайĕнчен çурçĕрпе хĕвелтухăç йеннеле. Йанчен патнеле чакнă. Унта халĕ çапăçусем пыраççĕ. Йапони çарĕсен Шаљси провинцин кăнтăрпа çурçĕр пайĕ хушшинчи çыхăнуне пачах татнă.

Шаљдун провинцинче йапонĕцсем Ичжоу йатлă хула çине наступлени тăваççĕ. Китай çарĕсем хулана хыттăн сыхлаççĕ, мартăн 24-мĕшĕнче пĕр кунта вунă хутчен контрактăкăна куçнă.

Таљцзиљ—Пукоу чукунçул патĕнчи фронтăн çурçĕр участинче мартăн 24-мĕшĕнче çĕрле Китай çарĕсем Йапони çарĕсен пĕр колоннине çĕмĕрсе тăкнă. Китайĕцсем çурçĕреле кайала чакса пыракан Йапони çарĕсене Исйаљ йатлă хула çывăхне çитиччenex хăваласа кайнă.

Йапонин виçĕ йăвăр бомбовозĕ, икĕ истребитĕл хўтĕлесе пынипе, Кайфын çине (Хенаљ провинцин столици) бомбăсем пăрахма хăтланнă, анчах китайĕцсем çўлеле пемели тупăсемпе хыттăн пеме пуçласан, вĕсем кайала тарнă.

Чжецзйан провинцинче Китай çарĕсемпе партизансем пĕрле Цсйаљтан йатлă йуханшывĕн çурçĕр çыранĕнче тата Ханчжоуран хĕвелтухăçнерех вăрçаççĕ. Мартăн 24-мĕшĕнче Китай партизанĕсем Фуйан йатлă хула çине (Ханчжоуран кăнтăрпа хĕвеланăç йеннеле) хăйулăн лырса тапăннă. Хулана кĕрсе кайса, партизансем Йапони укреплениймĕсене çĕмĕрнĕ, Йапони салтакĕсене вуншарăн ăмантнă кайран вара тусем хушшине тарса çухалнă.

Мартăн 25-мĕшĕнче Китай самољочĕсем Шанхай çине тапăннă. Çав кунхинех Китай авиацийĕ Йапони самољочĕсем Наљчен йатлă хула çине (Изйанси провинцин столици) бомбăсем пăрахма паман. Йапони самољочĕсене хула çинчен хăваласа йанă.

Таљцзиљ — Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче партизансемпе хресченсен отрйачĕсем йапонĕцсене хирĕç хыттăн вăрçаççĕ.

Мартăн 24-мĕшĕнче партизансем Цўаљцзйаç йатлă хулана пырса кĕрсе, унта вĕсем Йапони казармисене вут тĕртсе çунтарса йанă тата тытăçса çапăçнă чухне йапонĕцсене 200 çынна йахăн вĕлернĕ. Фронт çывăхĕнче пурăнакан халăхсем партизансене тăтăшах пулăшаççĕ.

(ТАСС).

Китай артиллерийĕ Йапони крейçĕрне сийенленĕ

Мартăн 25-мĕшĕнче Шанхайа Йапонин вăйлăљ сийенленнĕ крейсĕрĕ çитнĕ. Унăн корпусне чылай çĕртен снарйадсемпе персе шăтарнă. Крейсĕр йатне тупса палăртман хă. Ăна мартăн 23-мĕшĕнче Чжецйанре Нинбо форчĕсем патĕнче Китай артиллерийĕ персе сийенленĕ.

(ТАСС).

Ситройен савăтĕнчи забастовкă

Мартăн 24-мĕшĕнчен пуçласа Парижре тата унăн çывăхĕнчи вырăнсенче автомобиљсем тăвакан Ситройен савăчĕсен çурчĕсене бастовкă тăвакан рабочисем йышăнса тăраççĕ. Рабочисем çĕнĕрен коллективлă догăвăрсем туса çирĕплетме тата ĕçукçи çынчен тăракан ыйтăва пăхса тухса, ăна пурнăçа кĕртме ыйтаççĕ, мĕншĕн тесен рабочисен пурнăçĕ 43 процента çити хакланнă. Ситройен савăчĕсенче 16.400 çын бастовкă тăвать.

Францин портфелсĕр минстрĕ Венсан Ориољ мартăн 25-мĕшĕнче бастовкă тăвакан рабочисен делегацине тата савăт хуçисен делегацине йышăнна. Анчах та нимĕнле килешў те туман, мĕншĕн тесен савăт хуçисен делегацийĕ рабочисем ыйтнипе килĕшмен.

(ТАСС).

К Ĕ С К Е Н

●● Августăвра (Пољша) Пољшăпа Литва хушшинче калаçу пуçланнă. Калаçу Пољшăпа Литва хушшинче чукунçул тата телеграф çыхăнуне йĕркелесе йарасси çинчен пырать.

●● Официаллă пĕлтерўсем тăрăх, 1937 çулхи виççĕмĕш квартăлта Пољшăра 568 забастовкă пулнă, вăл забастовкăсене 123 пин рабочи ытла хутшăннă.

●● Англи љотчикĕ Парвис хăвăрт вĕçес тĕлĕшпе тĕнчипе çĕнĕ рекорд тума хатĕрленет. Рекордлă вĕçеве „Спитфайер" истребителпе тăваççĕ, çав истребитĕл пин лаша вăйлĕ моторпа ĕçлет. Љотчик сехетре 800 километр хăвăртлăхпа вĕçме шутлать.

●● Гуанси провинцинче (Китай) 14 мĕлйун çын пурăнать пулсан, вĕсенчен 2.500.000 çынна йахăн вăрçă ĕçне вĕренет. Провинцири тĕрлĕрен институтсенчи студентсем Йапони захватчикĕсене хирĕç, Китай халăхĕ никама пăхăнмасăр пурăнассишĕн кĕрешнĕ çĕрте малти ретре пыраççĕ.

●● Мартăн 25-мĕшĕнче Хаљкоура нацине çăлса хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен студентсен организацийĕн Пĕтĕм Китайри иккĕмĕш конференцийĕ уçăлнă. Конференцине студентсен 73 организацинчен 123 делегат пухăннă. Конференци Йапони агреççине хирĕç кĕрешме çамрăксене çар ĕçепе политикăна вĕрентессине вăйлатасси çинчен сўтсе йавать.

●● Йапони хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 23-мĕшĕнче Чанбашанри кăмрăк шахтисенче (Китайри Хебей провинцин çурçĕр йенчи пайĕ) Китай горљакĕсем 10 пин çын забастовкă тунă. Забастовкă тăвакансем рудниксен кантурне çĕмĕрсе тăкнă. Забастовкă тунă çĕре Йапони жандармерипе полицине йанă.

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Мариупăљри Иљйич йачĕпе тăракан савăтри чаплă сталевар Макар Мазай йулташ мартăн 25-мĕшĕнче çĕнĕрен пысăк çĕнтерў тунă. Вăл пĕр тăваткăл метр кăмакаран 18,22 тоннă хурçă шăратса кăларнă (кăмакан техникăлă хăвачĕ—7,5 тоннă).

●● Кирăв йачĕпе тăракан 22-мĕш №-лĕ шахтăри (Донбасс) бурильщик комсомолец Рйабцĕв йулташ хăйĕн çултаlăклăх нормине пурнăçа кĕртнĕ. Вăл, 1.935 метр пăраласа шăтарнă, çулталăкра норма тăрăх 1.925 метр пăраласа шăтармала пулнă.

●● И кĕмĕш пилĕкçуллăх çулĕсенче Дон тăврашĕнчи 139 колхозра електростанцисем лартнă. Илйич лампиçем хаљ 200 йалта çутатаççĕ. Кăçалхи çул Донра çĕнĕрен 8 електростанци тума палăртнă. Вĕсем 13 колхоза електричествă вăйĕ парса тăмала пулаççĕ.

(ТАСС).

Колхоз пасарĕсене йусани

ССР Сойузĕнче колхоз пасарĕсем тăвата пин çурăна йахăн шутланаççĕ. Вĕсенчен нумайĕшне йусаса тирпейлемеле. Кăçалхи çул мĕн пур сойузлă республикăсенче те çĕнĕ пасарсен строителствин пуçланать. Кунсăр пуçне хаљ мĕн пур колхоз пасарĕсене йусаса тирпейлемеле. Павиљйонсемпе сĕтелсем тума 17 мĕлйун тенкĕ ытла укçа панă.

Пысăк хуласĕнче колхоз пасарĕсенче холодиљниксем тума палăртнă, вĕсенче аш-какай продуктисене сутаччен малтан сыхласа усрама май пулать.

Пасарсенче чей ĕçмели çуртсемпе столовăйсем тума икĕ мĕлйун тенкĕ ытла расхутланмала. Мускаврa, Алма-Атара тата ытти хуласенче те колхозниксен çурчĕсене тума тытăнаççĕ.

(ТАСС).

Огнĕв лейтенант заставинчи (Украйнă ССР-ĕн хĕвеланăç чикки) отличник В. Н. ÇЕМИКАВ комсомолĕц чикĕ хуралĕнче.

Çуркуннехи йармăркăсем

Йарослављ облаçĕнчи районсенче çуркуннехи йармăркăсене хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать. Вăл йармăркăсенче выљăхсем нумай сутмала. Йармăркăсем Костромăра, Пошехоно-Володарскинче, Галичре, Некоузре тата Ростовра пулаççĕ.

Йармăркăсене тĕртсе тунă пир-авăрсем, сăран атă-пушмаксем трикотаж, çĕвĕ çĕлемели машинăсем тата ытти таварсем те илсе тухаççĕ.

(ТАСС).

Шчербиновĕцсем акара

Краснодар крайĕнчи Шчербиновск районĕ пысăк тухăçлă тырпул туса илес тĕлĕшпе хăйĕн Пĕтĕм Сойузри социалисăмлă ăмăрту тăрăх илнĕ обйазателствисене тўрĕ кăмăлпа пурнăçа кĕртсе пырать. Вăл кĕрхи çĕртмене 17.015 гектара виçĕ кун хушшинче сўрелесе пĕтерне, планпа та çаплах палăртнă пулнă. Пучахлă тырăсене те акса пĕтереççĕ. Мартăн 25-мĕшĕ тĕлне колхозсем урпа, сĕлĕ тата тулă пурĕ 8.548 гектар акнă. Колхозсем ака сркне çирĕппĕн тытса пыраççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕсем ака срукне чакарса пыраççĕ.

(ТАСС).

Наградăсем панă

189-мĕш №-лĕ савăт пăр çĕмĕрекен „Йермак" пăрахута срукчен йусас тĕлĕшпе тата ăна куçса çўрекен „Çурçĕр пољусĕ" станцин çыннисене пăр çинчен илсе кăларма похода тухса кайма хатĕрлес тĕлĕшпе правителствă панă заданине чаплăн пурнăçа кĕртнĕшĕн, Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕпе савăтăн çав ĕçре уйрăм палăрнă работникĕсене 7 çынна наградăсем панă. Вĕсенчен виççĕшне „Знак Почета" орденĕ парса наградăланă, тăвата çынна—ССР Сойузĕн Верховнăй Совечĕн хисеплĕ грамăттине панă.

(ТАСС).

Пăрахут путнă

Мартăн 25-мĕшĕнче Каçпи тинĕсĕнче „Пушкин" йатлă пăрахут тепĕр пăрахут çумпе пырса перĕннипе шăтса путнă. „Пушкинăн" командирĕ çăланнă. Пăрахут путнă вырăна Шыв-çул транспăрт Халăх Комиссарĕн заместителĕ Кучеров йулташ кайнă.

(ТАСС).

М. Горький йачĕпе тăракан Тĕп библиотекăра

Алексей Максимăвич Горький çурални 70 çул тултарнă куна М. Горький йачĕпе тăракан Шупашкарти Тĕп библиотекă тимлĕн хатĕрленсе кĕтсе илчĕ. Вулакансен пўлĕмĕнче Алексей Максимăвич Горький пурнăçĕпе ĕçĕсене кăтартакан выставкă йĕркеленĕ, фотохаçат кăларнă. Фотохаçатра Горький хăйĕн литературă ĕçĕнчи малтанхи кунĕсенчен пуçласах, рабочи клас ĕçĕшĕн кĕрешес çул çине тăнине тĕплĕн кăтартнă. Витринăсем çинче писателĕсен паллă произведенийĕсене кăтартса панă.

Аслă вырăс писателĕн произведенийĕсене вулакансен йышĕ ўссех пырать.

Халĕ хулари ĕççыннисем библиотекăран Горькин „Детство", „Мои университеты", „Мать", „Сказки об Италии", „В людях", „Егор Булычев и др.", „Жизнь Клима Самгина", „Фома Гордеев", „Враги", „О литературе", „О Пушкине" т. ыт. произведенисене те вулама нумай илеççĕ.

Мих. Йакăвлĕв.

Лайăх ĕçленĕшĕн—преми

Мăналти (Ишлей районĕ) „Мăнал" промысла ертелĕ республикăри ертелсем хушшинче малта пырать. Ертелĕн пĕрремĕш квартăлта 30 пин чăпта çапмалаччĕ, вăл мартăн пĕрремĕшнех 31.500 чăпта çапнă.

Кулленхи нормăна тултарманнисем ертелре çукпа пĕрех. Йулашки вăхăтра ĕç нормине Федот Йегорăв йулташ 162,5 процент, Агафийа Пушкинăпа Анастасийа Николайĕвă йулташсем 140 процент тултарса ĕçлеççĕ.

Ертеле йалсоветпа колхоз пысăк пулăшу параççĕ. Йалсовет ертел ĕçĕ çинчен час-часах хăйĕн ларăвĕсенче сўтсе-йавса кăтартусем парать, материалсем тупса парса пулăшать. Колхоз правленийĕ ертеле ĕç вăйне тĕрĕс уйăрса панă.

Чăвашкуљпромсойуз правленийĕ „Мăнал" промысла ертелĕн ĕçĕсене хакласа, премисем пачĕ. Ертел правленин председателне Толстов йулташа 300 тенкĕ, йалсовет председателне Башкирăв йулташа тата колхоз председателне Терентйĕв йулташа 200-шер тенкĕ, Ф. Йегорăв, А. Пушкинă, А. Николайĕвă, Ф. Самойлăв йулташсене т. ыт. стахановĕцсене кашнинех 100-шер тенкĕ укçан преми панă.

Ертелте ĕçлекенсем иккĕмĕш квартăлта татах та лайăхрах ĕçлеме обйазателствăсем илчĕç.

Йашков.

КОЛХОЗА КĔРЕÇÇĔ

ЕЛĔК. Районра чылай единоличниксем колхоза кĕреççĕ. Урпашри „Хастар" колхоза 2 хуçалăх, Вăрманкассинчи „Труд" колхоза 2 хуçалăх тата Кĕртекассинчи Буденный йачĕпе тăракан колхоза пĕр хуçалăх кĕчĕç.

А. Çтепанăв.

Шупашкар хулинчи Хресчен çурчĕ. (Сойузфото).

РЕСПУБЛИКĂРА

Колхозри строителствă. Пушнарти (Йетĕрне р.) Мичурин йачĕпе тăракан колхозăн строителствин çулран çул ўссе пырать. Кăçал Пушкин урамĕн площадĕнче вут-кăвартан сыхланма вышкă тата депо тума тытăннă. Депопа йунашар автомобил лартма гараж тăваççĕ Иртнĕ çул подвал тунăччĕ. Кăçал унта електродинамă вырнаçтарчĕç. Електростанци майăн 1-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнать.

Н. Романăв.

Колхоз театрĕн гастролĕ. Чăвашсен 2-мĕш колхоз театрĕ Йелчĕк районне килчĕ. Район центренче „Айдар", „Гупа" пьесăсене лартрĕç тата пысăк концерт пачĕç. Хаљ театр йалсене тухса карĕ.

Куптащкин.

„Пугачев" фиљм. Мартăн 17—20-мĕш кунĕсем хушшинче Йетĕрнери кино-театр сурт.ĕнче „Пугачев" кинокартинă кăтартрĕç. Ăна 3.500 çын курчĕç.

П. Захарăв.

Çĕнĕ организаци. „Восток" колхозра (Тукаркас р.) 34 çынтан Осоавиахимăн пуçламĕш организацине турăмăр. Пуçламĕш организаци ваљљи пĕчĕк калибĕрлă винтовкă, противогаз тата Хĕрлĕ Çар çинчен çырнă кĕнекесем илĕмĕр. Осоавиахим членĕсем ПВХО значокĕн нормисене пама вĕренеççĕ. Пуçламĕш организацине граждан вăрçинче пулнă Чайкин йулташ йертсе пырать.

И. Николайĕв.

Шашкăла выљакансен ăмăртăвĕ. Мартăн 25 мĕшĕнче Шупашкарта шашкăла выљакансен ăмăртăвĕ пĕтрĕ. Пĕрремĕш вырăна коммуналлă строителствă техникумĕнче вĕренекен Герман Иванов тухрĕ. Вăл 1938 çулшăн хула чемпионĕ йатне илчĕ. Иванов 11 партирен 8 парти выљаса илчĕ. II мĕшпе III-мĕш вырăнта 7,5-шер очко илсе Студенецкие Мишуткин тухрĕç, 4-мĕш вырăна Попов, увăн 7 очко, V-мĕшĕнче Петров—6 очко т. ыт.

Пĕрремĕш, иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăна тухнисем республикăра турнира каяççĕ.

Г И.

Çирĕп сывлăхшăн. Сĕнтĕрвăрринчи вăрман ĕç техникумĕнчи студентсем хăйсен сывлăхне çирĕплетес тĕлĕшпе физкуљтурăна йуратса, тăрăшса вĕренеççĕ. Кăçалхи çул пилĕк студент Сĕнтĕрвăрри — Судовск маршрутпа 600 километра йĕлтĕрпе тухрĕç. Çавăн пекех техникумсем хушшинчи тата республикăри вăрман хатĕрлес тата йухтарас ĕçри работниксен профсойузĕ йачĕпе пулнă ăмăртура малти вырăнсене йышăннă. Халĕ профсойуз обкомĕ улта студента йĕлтĕрлĕ ăмăртура Архангельск хулине йанă. Техникумра ГТО нормисене паракансен шучĕ ўссех пырать Кăçалхи çул 45 студент ГТО значокĕсем илчĕç, унсăр пуçне 116 студент йĕлтĕрпе нормă панă.

Г Кољцов.

Канмали çурта йĕркелеççĕ

Кăçалхи çул Илйинкăри канмали çуртра 2.800 çын канмала. Хаљхи вăхăтра çуллана хатĕрленес ĕç хĕрўлĕн пырать. Канакансем пурăнмали çуртсене штукатурласа шуратаççĕ, столовăйне йусаççĕ, лармали, выљамали вырăнсене йĕркене кўртеççĕ.

Кăçал çуртсенче електричествă çути пулмала, ĕçмели шыв та водопроводсем тăрăх йухса пымала. Ку тĕлĕшпе халĕ çĕнĕрен динамомашинă тата шыв паракан двигателсене вырнаçтарас ĕç пырать.

Çаксем ĕнтĕ кăçалхи çул канмали çуртра иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан чылай лайăх пуласси не кăтартса параççĕ.

М. Т.

Шашкăпа шахмăт

Турнир пулса иртрĕ

ЙĔТĔРНЕ. Мартăн 14-мĕшпе 17-мĕш хушшинче Пушнарти туллимар вăтам шкулта шашкăпа шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта шашиссем 22 çын, шахматиссем 26 çын хутшăнса выљарĕç

Мартăн 14 мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕрремĕш турта шашиссемпе шахматиссем те аван выљарĕç. Шахмăтпа 7 мĕш класра вĕренекен Всеволод Романăвпа Павел Токарĕв 24-шер очко илчĕç.

Шашкăпа 4-мĕш класра вĕренекен Дмитрийĕв, 6-мĕш класра вĕренекен Крылов, Мокейĕв йулташсем мала тухрĕç.

Корољков.

**

СĔНТĔРВАРРИ. Районри физкуљтурă комитетĕ районра пĕрремĕш вырăна тухассипе шашкăпа шахмăт турнирĕ туса иртерчĕ.

Турнирта 20 çын выљарĕç. Шахмăтпа Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта вĕрентекен Богољубăв 10,5 очко выљаса илсе пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Шашкăпа „Кузнец" ертелĕн тимĕрçи—65 çулхи старик 6 очко илсе мала тухрĕ.

Г. Смирнов.

Йăнăшсене тўрлетни

Шăхасанти вăтам шкулта М. Волкăв йулташа „халăх тăшманне хўтĕленĕшĕн" комсомолран кăларнă. Волкăв вăтам шкулта преподавател пулса ĕçленĕ „халăх тăшманне" Куçмина профсойуз членĕнчен кăларнă чухне алă çĕклемен пулнă. Куçмина районри çутĕç пайĕ „халăх тăшманĕ" тесе ĕçрен кăларнă. Çавăншăн ăна профсойузран та кăларса йанă. Куçмина халăх тăшманĕ теме çителĕклĕ сăлтав пулман. Ăна хаљ профсойуза илнĕ. Хаљхи вăхăтра Куçмин Турхачти вăтам шкулта ĕçлет. ПСÇЛКС райкомĕ Волкăв Мануила комсомол ретĕнчех хăвармала тунă.

Шăхасанти вăтам шкултах, Афанасйĕв йулташа „политикăла тимсĕр, сисĕмлĕ пулманшăн" комсомолран кăларнă. Ун пек тĕслĕхсем нумай. Михайловăна, Саперăвăна (Ухман) тĕрĕссине пĕлеймесĕрех—„Тет, тесе калать тет" сăмахсемпе комсомол ретĕнчен кăларнă. ПСÇЛКС райкомĕ вĕсен ĕçĕсене тепĕр хут пăхса тухса, пурне те комсомол ретĕнчех хăвармала тунă. (Хамăр инфор).

ХРОНИКĂ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Совет Сойуз Геройне И. Д. Папанин йулташа ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управлени начаљникĕн пĕрремĕш заместителне лартнă.

Заметкăсем тăрăх

А. П. Петров йулташ Пăрмасри „Çĕнĕ çул" колхоз (Куславкка районĕ) итемĕ çинче çапнă ыраш 135—140 пăт йур айне пулни çинчен çырса пĕлтерчĕ. Заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ Куславкка районĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме йаначчĕ.—Заметкăра кăтартни тĕрĕс, колхоз правленин председателне—Горчакова ответ тыттараççĕ,—тесе пĕлтерчĕ Куславкка районĕнчи прокурор.

Тўрлетни

„Чăваш Коммунĕ" хаçатăн мартăн 27-мĕшĕнче тухнă „Красногвардейĕцсен йурри" автăрне кăтартман, унăн автăрĕ О. Колычев. Çав хаçатри ытти йурăсене тата мартăн 26-мĕшĕнче тухнă халăх йуррине вырăсларан И. Тукташ куçарнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНОВ.

Игорь Ильинский

БЫВАЛĂВЩИНĂ

(„ВОЛГА-ВОЛГА" ФИЉМ)

Епĕ ўкерĕннĕ тата çывăх вăхăтрах екран çине тухмалли „Волга-Волга" фиљмра (сценарипе режиссурă Г. В. Александрăвăн) мана Бывалăв сăнарĕ, Мелководск хулинчи вырăнти аlăсталăх промышлĕннăç тĕп управлени начаљникĕн сăнарĕ илĕртрĕ. Вăл—пирĕн совет бўрократчĕн, хăнжан, именсе тăман тата пĕр принципсăр карйерисăн, мăка ăслă, хăйне хăй çеç йуратакан, администрацилесе, ларакан „начаљникăн" сăнарĕ. Иљфпа Петровăн „Последняя встреча" йатлă калавĕнче пĕр „ответлă работник" çинчен çырса кăтартнă. Вăл çын хăйĕн специаљнăçĕ çинчен ыйтсассăн „ответлă работник" тесех ответ парать. Вăл пиншер трестсемпе учрежденисенче ĕçлесе курнă, пур çĕрте те хăйĕн „пĕтĕмĕшлĕ руководствине" тăмпайăн, талантсăрăн пурнăçа кĕртсе пынă. Унăн урăх професси çук. Тахçан вăл електромонтĕр пулнă, анчах, хăй пурнăçĕн ырлăхĕшĕн тата хăй карйеришĕн тăрăша-тăрăша, çав специаљнăçне те манса кайнă, хăй килĕнчи çунса кайнă пробкăна тўрлетме те пĕлмест. Йăлтах манса пĕтнĕ. Ĕçĕ çук, чăннипе илсе пăхсан обшчĕствăшăн уптан усă çук, ĕç пек курăнни çеç, сийелти хупă, супăљ кăпăкĕ çеç пур. Çурăлчĕ—вара ним те çук, йăлтах пушă вырăн.

Мелководск хулинчи вырăнти алăсталăх промышлĕннăç тĕп управлени начаљникĕ тата руководителĕ—Бывалăв та çавăн пекех. „Волга-Волга" фиљмра унăн рољне епĕ выљатăп.

Пĕртен пĕр тĕллев — Мускава пырса лекес, унта ăшă вырăн йышăнас та карйерă тăвас тĕллев тытса, Бывалăв вырăнтан вырăна куçса çўренĕ.

Бывалăв, картинăра кăтартнă тăрăх, халăх тăшманĕ мар. Анчах халăх тăшманĕн ембрионĕсем ун ăшĕнче пур.

Çав ембрионăсем çинче, принципсăрлăх, хăйне хăй вĕçĕхĕррисĕр йуратнин никĕсĕ çинче, епĕ те епĕ тени, йăлтах пушă, йурăхсăр морաљĕ пулнин никĕсĕ çинче Бывалăвран малашне усал, чи хайар тăшман çитĕнсе ўсме пултарать. Пирĕн фиљмра куракансем унтан сахал мар кулни, пĕтерсе лартакан тата тăрă шыв çине кăларакан кулăпа кулни те çителĕклĕ.

Епĕ ăçта та пулин мĕнле те пулин учрежденире унта пынă çын: „пăрахсамăр Бывалăв шуткисене" йе „есĕр йăлтах Бывалăв пек", „Бывалăвщинă" т. ыт. тесе ответ панине итлес пулсассăн, вăл маншăн алă çупса пахаланинчен те маларах, хаклăрах пулĕ. Ку вăл манăн задачă пурнăçа кĕнине кăтартса паракан паллă пулĕччĕ.

Пирĕн вăхăтра, паллах, хамăр çĕршыври мĕнле те пулин паха йенлĕ гражданинăн сăнарне туса пани кăмăллăрах, аванрах. Хамăр çĕршыври паха йенлĕ сăнарсене ĕмĕр-ĕмĕрех асра тытĕç, анчах Бывалăв пек çăтăл-çатăл тата çумкурăкĕ çинчен часах манса та кайĕç. Анчах мĕн тăвăн-ха! Епĕ — комедипе сатирă йенне туртăнакан актĕр, çавăнпа та çавăн пек Бывалăвран мăшкăласа кулас ĕçе, вăл çўп-çапа кино прожектăрĕпе çутатса парас, ăна пĕтерсе лартакан тата усса йаракан кулăпа кăтартса парас ĕçе, мансăр пуçне урăх кам тумала пултăр-ха.

„Волга-Волга" фиљма йепле ўкернĕ?

Кино ўкерекен коллектив, режиççор Г. Александрăв йертсе пынипе, шăпах пĕр флотилипе Атăл, Кама тата Чусовайа шывĕсем тăрăх виçĕ уйăх хушши ишсе çўренĕ. Флотилире „Память Кирова" пăрахут, ўкернĕ чух выљама тунă „Севрюга" йатлă бутафорлă пăрахут, паруслă баржă „Лесоруб", моторлă кимĕсем тата пĕр глиççĕр пулнă.

Епĕ, хаљ ĕнтĕ Александровăн, режиççорсăр пуçне, „пăрахут капитанĕн" квалификацийĕ пур, тесе шухăшлатăп, çавăн пекех експедицире пулнисем пурте пăрахут „лартас", „тапратса йарас" ĕçĕн пĕтĕм вак-тĕвекĕсемпе, йунханшыв транспорчĕн ĕçĕпе паллашнă.

Шыв çинче кино ўкересси пит те тĕрлĕ йенлĕ. Пăрахут куçса çўренисем, баржăсене ўкернĕ чух выљама тунă пăрахута хĕвел йенеле çавăрнисем (вăл вырăнсенче хĕвелĕ те вара пит нумайах çутатмаст),—çаксем пурте ĕнтĕ вĕççĕр нумай вăхăт çухаттарнă.

Хамăрăн калама çук чаплă шывсем çинче, чаплă çутçанталăкра,—виçĕ уйăх ишсе çўренĕ вăхăтра епĕр ăна тем пекех хăнăхнăччĕ, унпа епĕр кунран кун ытларах та ытларах киленеттĕмĕр,— виçĕ уйăх хушши ĕçленин условийĕ хăйех те ĕнтĕ пирĕн ĕçе çĕклентерсе, хаваслантарса пынă.

(ТАСС).

Академи театрĕнче

Мартăн 29-мĕшĕнче

Вырăсла спектаљ

ШЕКСПИР

ОТЕЛЛО

(4 пайлă)

Аслă режиççор Г. В. СТРАНСКИЙ лартать.

Талон № 151.

„Чăваш Коммунĕ" сыранса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 167. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 197. Тираж 15.665 25—94 см. 1—1 п. л.